ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1956 çул Январь 13 ЭРНЕКУН № 9 (9688)

Хакĕ 20 пус. 38-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Н. С. Хрущев юлташ Иран парламенчĕн делегацийĕн пуçлăхне Мохаммед Саед господина йышăнни (1 стр.).

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Монголи Халăх Республикин Аслă Халăх Хурал Президиумĕн Председательне Ж. Самбуна йышăнни (1 стр.).

КПСС ХХ-МĔШ СЪЕЗЧĔ ЯЧĔПЕ (1 стр.).

ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔПЕ КПСС ОБКОМĔНЧЕ. Республикăри районсем 1955 çулта колхозсенче выльăх-витисем тăвас енĕпе социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен (2 стр.).

Н. Герасимов, В. Петров.—Массăлла-политикăлла ĕçе куллен ертсе пыман çĕрте (2 стр.).

С. Коротков. — Кукуруза — тĕштырă тата паха выльăх апачĕ (2 стр.).

АГИТАТОРСЕНЕ ПУЛĂШМА. Республикăри промышленность ўсĕм çулĕ çинче (3 стр.).

ССР Союзĕ Англири «Тетюхе майнинг корпорейшн» тата «Лена гольдфильдс» обществăсене панă обязательствăсем тăрăх тўлесси çинчен тăракан ыйту пирки (4 стр.).

Китай Халăх Республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ тунă заявлени (4 стр.).

Облаçри парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕ

Паян Шупашкарта облаçри парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕ уçăлать. Конференци Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ хăйĕн ХХ-мĕш съездне хатĕрленнĕ вăхăтра, çĕршыври промышленноçпа ялхуçалăхне малалла хăватлăн аталантарассишĕн ĕçсыннисен производствăри тата политикăлла активлăхĕ ўснĕ услăвисенче пулса иртет.

Парти съезчĕсене иртterme хатĕрленсе, тесе вĕрентнĕ гениллĕ В. И. Ленин, пирĕн хамăр ку таранччен тунă ĕçсен итогне тумалла, малашнехи практикăлла ĕçсене пурнăçлама ырри, пахи мĕн пуханнă — çавна йăлтах пĕрлештермелле те палăртса хунă ĕçсене пĕтĕм вăйпа пурнăçа кĕртсе пымалла. Малалла кайса пымалла, тенĕ Ленин, малалла пăхас пулать, съезда хуçалăх строительствинчи пĕрлехи ĕçпе, партин мĕнпур членĕсен пĕрлехи вăй-хăвачĕпе тĕплĕн шухăшласа, тимлĕн пăхса тухса тунă практикăлла опытпа пымалла.

Облаçри партконференци КПСС обкомĕ XXV-мĕш конференци пулнăранпа иртнĕ икĕ çул хушшинчи ĕçсен итогне тăвĕ, критикăпа самокритикăна анлăн сарса, çитменлĕхсене хăюллăн уçса палăртĕ, хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçе малалла лайăхлатмалли майсене кăтартса парĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене, партипе правительство панă директивăсене пурнăçласа, республикăри парторганизаци отчетлă тапхăрта, КПСС Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе, Чăваш АССР халăх хуçалăхĕпе культурине аталантарас тĕлĕшпе хăшпĕр çитĕнўсем турĕ. Республика промышленноçĕ çак çулсенче малалла аталанса пычĕ.

Республикăри промышленность, пĕтĕмĕшпе илсен, продукци туса кăлармалли плана 1954 çулта 106 процент, 1955 çулта 103 процент тултарнă, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăхри заданисене вара тăватă çул та виçĕ уйăх çурă хушшинче пурнăçланă. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра планран ирттерсе 300 миллион тенкĕлĕх ытла продукци туса кăларнă. Çавăн пекех пилĕк çул хушшинче промышленноçра ĕç тухăçлăхĕ 59 процент ўснĕ, продукцин хăйне ларакан хакне йўнетнипе темиçе миллион тенкĕ укçа перекетленĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн июльти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе, республикăри промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче çĕнĕ техникăпа малта тăракан технологие производствăна кĕртес, ĕç тухăçлăхне ўстерес, продукци пахалăхне лайăхлатас тата унăн хăйне ларакан хакне йўнетес енĕпе те пирвайхи утăмсем тунă. Анчах нумай предприятисен тата министерствăсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Республикăра чылай предприятисем государство планне çултан-çул тултармаççĕ. Чугун çул, шыв çул тата автомобиль транспорчĕпе халăх хуçалăхне кирлĕ таварсем тата пассажирсем турттарассине тивĕçлипе йĕркелемен. Вăрман промышленноçĕ юлса пынине çаплах пĕтермен. Çак икĕ çул хушшинче вăл çĕршыва 373 пин кубометр йывăç сахалрах хатĕрлесе панă. Промышленность строительстви çителĕклĕ хăвăртлăхпа пулса пымасть. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммунальнăй строительство валли тата культурăпа йăла учрежденийĕсем тума уйăрса паракан укçа-тенкĕпе япăх усă кураççĕ. Облаçри партконференци республикăри промышленноçпа транспорт ĕçне тĕплĕн тишкерĕ, ăна малалла лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕсен решенийĕсене пурнăçласа, республикăри колхозсенчи, МТС-сенче, совхозсенчи ĕçченсем юлашки икĕ çул хушшинче хăшпĕр ўсĕмсем турĕç. Колхозсемпе МТС-сем 1955 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене лайăхрах туса ирттерчĕç. Республикăри колхозсем государствăна тырă, йĕтĕнпе кантăр вăрри, пахча çимĕç, утă, çăм памалли плансене срокчен тата ирттерсе пурнăçларĕç. 1955 çулта кĕракине ăнăçлă ирттернĕ, çĕртме тумалли плана тултарнă. Акмалли çĕрсен лаптăкĕ пĕлтĕр, 1953 çулхипе танлаштарсан, 32.500 гектар ўснĕ, тĕштырăпа техникăлла культурăсен тухăçлăхĕ те пысăкрах пулнă. МТС-сен колхоз производствинчи ролĕ çулсерен ўссе пырать.

Колхозсем организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çуллен тĕрекленсе пыраççĕ. Колхоз председателĕсем пулса ĕçлеме пурĕ 325 çын янă, вĕсенчен 233-шĕ—парти членĕсем. Партипе правительство колхозсенче ĕçлеме кайнă çынсем. Колхоз производствинче нумай çулсем хушши ĕçлесе пуян опыт пухнă чылай организаторсен йышне çак пысăк вăй хутшăнни хăйĕн пахă результатне пачĕ.

Анчах, уйрăм районсем, малта пыракан колхозсем хăшпĕр çитĕнўсем тунă пулин те, республика 1955 çулта ялхуçалăх продукчĕсем туса илессине колхозсен малашлăх планĕнче палăртнă шая çитерме пултараймарĕ. Пĕлтĕр уйрăмах çĕрулми, хуратул, вир, хăмла тухăçсăр пулчĕç. Нумай колхозсем кукуруза акса тăвас ĕçри пысăк та ответлă задачăна пурнăçлаймарĕç. Малта пыракан колхозсем—Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Улатăр районĕнчи «Победа» тата ытти хăшпĕр колхозсем кукурузăн симĕс массине 400—600-шер центнер туса илчĕç пулин те, пĕтĕмĕшпе илсен, республикипе кукуруза тухăçлăхĕ 64-шар центнер кăна пулчĕ. Республикăра çĕрĕç культури тивĕçлĕ вырăнта тăмасть.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси ялхуçалăхĕн чи кая юлнă отраслĕ. Çак икĕ çул хушшинче выльăх-чĕрлĕх хисепĕ ўсес вырăнне чакнă. Выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ çав-çавах сахал туса илетпĕр. Пĕлтĕр ялхуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне сĕт 37-шер центнер кăна, е 1954 çулхинчен 34-шар килограмм сахалрах, суса илнĕ. Ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илесси те ерипен ўссе пырать. Конференци республикăри ялхуçалăхĕ мĕншĕн юлса пыни çинчен тĕплĕн сўтсе явĕ, ăна хăвăртрах аталантарма пулăшакан майсене палăртса хăварĕ, партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен ертсе пырас ĕçри ответлăхне татăклăн ўстермелле тăвĕ.

Халăха вĕрентес, халăх сывлăхне сыхлас, халăх хуçалăхĕпе культурăн ытти отраслĕсене аталантарас енĕпе те пирĕн çитĕнўсем çук мар. Анчах, йышăнас пулать, ку тĕлĕшпе çитменлĕхсем те чылай-ха.

Хуçалăхпа культура строительствинче çитĕнў хыççăн çитĕнў тăвасси, вĕсем нумай вăхăтлăх пуласси, мĕнпур ăнăçлăх—организаторла тата партилле-политикăлла ĕçе кучухнехи требованисен шайне хăпартнинчен килет. Анчах партин нумай райкомĕсемпе хула комитечĕсен, çавăн пекех КПСС обкомĕн ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пурри палăрать,—ун çинчен партин районсенчи тата хуласенчи конференцийĕсенче кăтартса пачĕç. Тĕп çитменлĕх—парти комитечĕсем хăйсен ĕçне партин Центральнăй Комитечĕн Пленумĕсем кăтартса панă пек урăхлатса çĕнетес ĕçе вăраххăн туса пынинче, хăшпĕр чухне хуçалăхпа культура строительствине ĕçе тĕплĕн пĕлмесĕр ертсе пынинче, организаторла ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменнинче.

Организаторла ĕç вăл, нимрен малтан, ĕçсыннисем хушшинче тăвакан ĕç пулмалла. Организаторла ĕç совет çыннисен производствăри тата политикăлла активлăхне ўстерме куллен-кун пулăшмалла. Парти организацийĕсен çĕннине, малта пыраканнине йышăнса илмен, ĕçре кăшт çитĕнўсем тунипех çырлахса пурăнакансене хирĕç хытă кĕрешмелле, малта пыракансен опычĕпе наука çитĕнĕвĕсене производствăна анлăн кĕртсе пырас тесе ырми-канми тăрăшмалла. Çак тĕллевпе мĕнпур партилле-политикăлла, идеологилле ĕçе коммунизм строительствин конкретлă задачисемпе тачă çыхăнтармалла. Нимĕн иккĕленмелли те çук, конференци идеологилле ĕçри çитменлĕхсене те хăвăртрах пĕтерме пулăшĕ.

Умра тăракан задача çакăн пек: массăсемпе çыхăну тытассине пĕрмаях лайăхлатса тата çирĕплетсе пымалла, хуçалăхпа культура строительствине парти енчен ертсе пырассине лайăхлатмалла.

Облаçри парторганизацири коммунистсем паян уçăлакан XXVI-мĕш конференцие КПСС Центральнăй Комитечĕ тавра тачă пĕтĕçнипе, республика хуçалăхĕпе культурине малалла аталантарас ĕçри пысăк та ответлă задачăсене чыслăн пурнăçлама хатĕр тăнипе кĕтсе илеççĕ. Конференци орденлă Чăваш республикинчи ĕçсыннисем партипе правительствăн мĕнпур заданийĕсене пурнăçлама хатĕр тăнине тепĕр хут уççăн кăтартса парĕ.

1956 çулхи январь уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ (литрпа)

Районсем	Миçе литр	Районсем	Миçе литр
Çĕрпў	35,1	Канаш	16,3
Улатăр	31,5	Шăмăршă	16,2
Вăрнар	29,6	Чурачăк	15,3
Чкаловски	26,8	Хĕрлĕ Чутай	15,2
Муркаш	26,0	Сĕнтĕр	15,2
Етĕрне	25,8	Ишлей	14,6
Елчĕк	24,3	Советски	13,9
Çĕмĕрле	23,6	Пăрачкав	13,5
Шупашкар	20,5	Элĕк	13,4
Калинино	19,2	Вăрмар	13,3
Комсомольски	18,8	Кувакино	12,8
Йĕпреç	18,7	Октябрьски	12,5
Первомайски	18,6	Тăвай	12,5
Красноармейски	17,3	Сĕнтĕрвăрри	10,6
Шăхасан	16,9	Куславкка	7,9

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ К. Е. ВОРОШИЛОВ МОНГОЛИ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИН АСЛĂ ХАЛĂХ ХУРАЛ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ Ж. САМБУНА ЙЫШĂННИ

Январĕн 10-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Монголи Халăх Республикин Аслă Халăх Хурал Президиумĕн Председательне Ж. Самбуна йышăннă. Ж. Самбу Мускавра çула май чарăннă.

Ж. Самбупа пĕрле Монголи Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Д. Адилбиш тата Монголи Халăх Республикин Наука комитечĕн председателĕ Н. Жагварал пулнă.

Йышăнура СССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ Н. М. Пегов, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Н. Т. Федоренко, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Протокол начальникĕ Г. И. Фомин пулнă.

К. Е. Ворошиловпа Ж. Самбу хушшинчи калаçу ăшă кăмăлпа, туслăн иртнĕ. (ТАСС).

Н. С. ХРУЩЕВ ЮЛТАШ ИРАН ПАРЛАМЕНЧĔН ДЕЛЕГАЦИЙĔН ПУÇЛĂХНЕ МОХАММЕД САЕД ГОСПОДИНА ЙЫШĂННИ

Январĕн 11-мĕшĕнче КПСС Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш Секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ Иран парламенчĕн ССР Союзне килнĕ делегацийĕн пуçлăхне Мохаммед Саед господина йышăннă, унпа калаçнă. (ТАСС).

АМЕРИКĂРИ «ЭВРИМЕН ОПЕРА» ТРУППИН ИККĔМĔШ СПЕКТАКЛĔ

Мускавра Америкăри «Эвримен опера» труппи спектакльсем кăтартать. Январĕн 11-мĕшĕнче К. С. Станиславскипе В. И. Немирович-Данченко ячĕпе тăракан театр сцени çинче артистсем Джордж Гершвинăн «Порги и Бесс» ятлă музыкăлă драмине иккĕмĕш хут кăтартнă. Залра пĕр пушă вырăн та пулман.

Спектакль Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен кăнтăр енчи пĕр хулинчи негрсем пурăнакан кварталти çынсен пурнăçĕпе паллаштарать. Негр ăрăвĕсем çак спектаклĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ.

Тĕп рольсене Лесли Скотт (Порги), Марта Флауэрс (Бесс), Лоренцо Фуллер (Спортинг Лайф), Дон Мак-Карри (Кроун) вылянă.

Спектакльте Л. М. Каганович, Г. М. Маленков, А. И. Микоян, В. М. Молотов, М. Г. Первухин, М. А. Суслов, Н. С. Хрущев, Д. Т. Шепилов пулнă. (ТАСС).

БРАТСК ГИДРОЭЛЕКТРОСТАНЦИЙĔ ВАЛЛИ

Харьковри электромонтаж механизмĕсем тăвакан завод коллективĕ Ангара çинчи Братск гидроэлектростанцин строителĕсем патне хăватлă буровой машинăсем ярса панă. Çак машинăсемпе электропередача линийĕсем валли юпасем лартма никĕссем хывмалли шăтăксем чавнă çĕрте усă кураççĕ. Кашни агрегат çĕр чавакан 15 çын чухлĕ ĕç тăвать. 8—10 минут хушшинче вăл икĕ метр тарăнăш шăтăк чавать.

Хальхи вăхăтра предприятире гидроэлектростанци строителĕсем валли автобетономешалкăсем тата ытти оборудовани туса хатĕрлеççĕ. КПСС ХХ-мĕш съезчĕ ячĕпе ăмăртса ĕçлесе çак оборудование стройкăна январь уйăхĕнче — палăртса хунă срокран маларах тисе яма йышăннă. (ТАСС).

ТУЙМАЗАПА ОМСК ХУШШИНЧИ НЕФТЕПРОВОД

Январĕн 9-мĕшĕнче Туймазапа Омск хушшинчи нефтепровода ĕçе янă. Пушкăрт республикинче кăларакан нефть 1.300 километр тăршшĕ трубасем тăрăх Омскри нефтеперегоннăй завод резервуарĕсене юхса пырать.

Халĕ строительсем Омскпа Новосибирск хушшинчи нефтепровода вырнаçтарса майлаштараççĕ. КПСС ХХ-мĕш съездне чыслăн кĕтсе илес шутпа вĕсем икĕ уйăхри задание февралĕн 14-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама обязательство илнĕ. (ТАСС).

ЧИМ-КУРГАН ВОДОХРАНИЛИЩИ

Кашка-Дарья облаçĕнчи Камаши районĕнче Чим-Курган водохранилищине тума тытăннă. Çак ĕç валли 138 миллион тенкĕ уйăрса параççĕ.

Халĕ Камаши станцине строительство материалĕсем, оборудовани, техника илсе пыраççĕ. Рабочисем валли пурăнмалли суртсем тăваççĕ. Чим-Курган водохранилищине виçĕ çул хушшинче туса пĕтерме палăртнă. Унта 500 миллион кубометр шыв тăмалла пулать. Унти шывпа çĕнĕрен 45 пин гектар çĕре шăварма май килет. (ТАСС).

СĔТ-ÇУ ЗАВОЧĔ

Владимир облаçĕнчи Ковров хулинчи сĕт-çу завочĕн пĕрремĕш черетне ĕçе янă. Вăл кунне 15 тонна сĕтрен тĕрлĕ продукт туса кăларакан предприяти пулать. Симскри çу заводне туса пĕтереççĕ. Çак завод çулталăкра пĕр пин тонна сĕтрен продуктсем туса хатĕрлет. (ТАСС).

КПСС ХХ-мĕш СЪЕЗЧĔ ЯЧĔПЕ

Тракторсене срокчен юсаса пĕтеретпĕр

Съезд умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса, пирĕн коллектив февралĕн 14-мĕшĕ тĕлне мĕнпур тракторсене, 12 комбайнпа ытти машинăсене пĕтĕмпех юсама сăмах пачĕ. Çĕнĕ çул тĕлне мастерскойран 54 трактор юсаса кăлартăмăр, плана 93,1 процент тултартăмăр. Партин облаçри XXVI-мĕш конференцийĕ уçăлнă кун тĕлне тата 7 трактор хатĕр пулать.

Тракторсене юсама мастерскойра 28 узел тунă. Иртнĕ çулхи тăваттăмĕш квартал итогĕсем тăрăх МТС-ри куçса çўрекен Хĕрлĕ ялава И. Соловьев юлташ ертсе пыракан узела панă. Ку узел юсав ĕçĕсене графикпа палăртнă срoксенче тата лайăх тăвать.

Ăмăртура хăвăртлăх коробкине юсакан узел иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Ку узела опытлă механизаторсем Н. Зенедтиновпа З. Азмуханов юлташсем ертсе пыраççĕ. Участокри механик А. Тарасов коммунист тĕрĕслесе тăнипе юсанă моторсем яланах пĕр тикĕс ĕçлеççĕ.

Юсав ĕçне механиксемпе пĕрле трактор бригадин бригадирĕсем те активлăн хутшăнаççĕ. Партин облаçри конференцийĕн делегачĕ П. Шайкин юлташ ертсе пыракан бригада «Дружба» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче ĕçлет. Бригада иртнĕ çулхи ĕçсен планне 120,8 процент тултарнă, 15 лаша вăйлĕ кашни трактор пуçне 796 гектар чухлĕ ĕç тунă. Бригада ĕçлесе паракан колхозсенче пĕлтĕр 15-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Шайкин юлташ бригади кăçалхи çуракине лайăх хатĕрленет. 5 трактортан 4 тракторне мастерскойран юсаса кăларнă.

А. Михайлов коммунист ертсе пыракан бригада «Гвардеец» колхозра ĕçлет. Ку бригада тракторсемпе ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса пĕтерчĕ. Механизаторсем халĕ çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитме колхоза пулăшаççĕ.

Тракторсене юсанипе пĕрлех ялхуçалăх машинисене çуракине хатĕрлес ĕç ăнăçлă пырать. Çĕнĕ çул тĕлне 45 плуг, 60 сеялка, 47 культиватор, 12 лущильник юсанă.

Пирĕн механизаторсем тунă çитĕнўсемпе лăпланса лармаççĕ. Партин ХХ-мĕш съезчĕ уçăлнă тĕле вĕсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса пĕтерессишĕн, çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн ырми-канми кĕрешеççĕ.

М. ПЕТРОВ.

Чкаловски МТС-ĕнчи партбюро секретарĕ.

Çĕрпўсем панă сăмаха чыслăн пурнăçлаççĕ

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Çĕрпў районĕнчи колхозсем пысăк çитĕнўсем турĕç. 1955 çулхи октябрьпе декабрь уйăхĕсенче—виçĕ уйăх хушшинче—кашни ĕнерен 253-шар килограмм сĕт суса илнĕ. Уйрăмах Хрущев ячĕпе тăракан колхоз пысăк ўсĕм тунă. Ку колхозра юлашки виçĕ уйăхра вăтам шутпа кашни ĕнерен 649-шар килограмм сĕт суса илнĕ. КПСС Çĕрпў райкомĕпе райсовет исполкомĕ юлашки виçĕ уйăхри социализмла ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса, райкомпа райисполкомăн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне Хрущев ячĕпе тăракан колхозрах хăвармалла тунă. Дояркăсенчен Сталин ячĕпе тăракан колхозри Мария Петрова доярка малта пырать. Виçĕ уйăх хушшинче вăл хăй пăхакан кашни ĕнерен 860-шер литр сĕт суса илнĕ.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе калани çине ответлесе, Çĕрпў районĕнчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем тăватă уйăх çурă хушшинче—февралĕн 14-мĕшĕ тĕлне кашни ĕнерен 550-шар килограмм сĕт суса илме, 1.500 пуç сысна самăртма сăмах паначчĕ.

Сысна фермисенче ĕçлекенсем хăйсен обязательствине çĕнĕ çул тĕлнех пурнăçларĕç, виçĕ уйăх хушшинче районĕпе пурĕ 1.717 пуç сысна самăртнă. Сысна фермисенче ĕçлекенсенчен «1905 год» колхозри А. М. Беляева юлташ малта пырать.

Районти сысна ĕрчетекенсем съезд уçăлнă кун тĕлне тата 800 пуç, районĕпе пурĕ 2.500 сысна самăртса парассишĕн кĕрешеççĕ.

Сĕт суса илесси ўссе пынă май, Çĕрпўри çу завочĕ çĕнĕ çула кĕпĕренпе районти колхозсенчен куллен тăватшар пин литртан кая мар сĕт йышăнать, ку вăл, иртнĕ çулти январĕн пирвайхи кунĕсемпе танлаштарсан, 3 хута яхăн нумайрах пулать. Государствăна сĕт парас ĕçе хутшăнман колхоз районта çук.

Сталин ячĕпе, Хрущев ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан, «Новая жизнь» колхозсенчи ĕçченсем кăçалхи пĕрремĕш çур çулта государствăна сĕт памалли плана КПСС ХХ-мĕш съезчĕ уçăлнă кун тĕлне тултарма тата темиçе пиншер литр сĕт сутма обязательство йышăнчĕç. Хăйсен сăмахне вĕсем чыслăн пурнăçлаççĕ. Ку колхозсен фермисенчен хальхи вăхăтра çу заводне куллен 250—600-шер литр сĕт леçсе тăраççĕ. Çу завочĕ 1956 çулхи 1-мĕш кварталти плана партин ХХ-мĕш съезчĕ уçăлнă кун тĕлне тултарассишĕн кĕрешет.

Хăрпăр хăй хуçалăхĕнчен государствăна 1956 çулшăн сĕт паракан колхозниксемпе служащисен шучĕ те куллен хутшăнса пырать. Январĕн 7-мĕшĕ тĕлне вĕсенчен çу завочĕ 25 пин ытла литр сĕт йышăннă. Ялсенче сĕт пухакансем хăйсене панă икĕ уйăхри задание партин ХХ-мĕш съездĕ уçăлнă кун тĕлне пурнăçлассишĕн ăмăртаççĕ.

Паха пуçару

КАНАШ. (Хамăр корр.). Вагонсем юсакан заводри юсавпа комплект цехĕ юлашки вăхăтра лайăххрах ĕçлеме пуçларĕ. Кунти малта пыракан рабочисем ĕç тухăçлăхне ўстерессишĕн çĕнĕрен те çĕнĕ майсем шыраса тупма, ĕç кунĕпе, оборудованипе туллин усă курма, материалсене перекетлеме тăрăшаççĕ.

Нумаях пулмасть цехра малта пыракан газосварщиксем Филиппов, Люкшин, Орлов, Дементьев тата ытти юлташсем ырă пуçару турĕç. Вĕсем продукци ытларах туса кăларассишĕн, ĕç тухăçлахне ўстерессишĕн социализмла ăмăртăва сарса пынипе пĕрлех, рабочисене кашни çын ĕçлекен вырăнти тата производствăри мĕнпур участоксенче çирĕп йĕрке тума, производство культурине ўстерме чĕнсе каларĕç.

— Пирĕн цехри чылай участоксенче таса мар. Хăшпĕр рабочисем хăйсем ĕçлекен оборудование таса тытмаççĕ, брак тăваççĕ, цехри хăшпĕр участоксем заданисене йĕркеллĕ тултарса пымаççĕ,—тесе çыраççĕ вĕсем хăйсен çырăвĕнче.—Производствăри тасалăхпа йĕркелĕх—ĕç тухăçлăхне ўстерсе пымалли кирлĕ услови. Эпир хамăр ĕçлекен участока пур енчен те кăтартуллă тăватпăр, цехри мĕнпур коллектива пирĕнтен пример илме чĕнетпĕр, — тесе çыраççĕ вĕсем.

Çак пуçарăва ытти рабочисем кăмăллаcа йышăнчĕç. Вĕсем те производство культурине ўстерессишĕн кĕрешĕве хутшăнаççĕ. Цех администрацийĕ ĕçе организацилессине лайăхлатас майпа кирлĕ мерăсем йышăнать. Халĕ цехра смена вĕсленнĕ хыççăн тепĕр сменăна ĕçлеме килнисем станоксемпе оборудование тĕплĕн пăхса йышăнаççĕ. Çавна май кашни рабочи смена вĕсленнĕ хыççăн хăйĕн станокне, ĕç вырăнне тасатса хăварма тăрăшать. Юлашки вăхăтра ĕç тухăçлăхĕ те ўсрĕ. Цехра тĕп производствăра ĕçлекенсенчен чылайăшĕсем кулленхи нормăна ирттерсе тултараççĕ.

Ĕçри хастарлăх

МУРКАШ. (Телефонпа). Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем вырăнти тата минераллă удобренисем уй-хире кăларас ĕçе хастарлăн хутшăнчĕç. Паянхи куна хире 3.000 тоннăна яхăн тислĕк кăларса купаланă, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ чылай хатĕрленĕ. Ку ĕçре Долгов юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать.

Ялхуçалăх артелĕн ĕçченĕсем партин ХХ-мĕш съезчĕ тĕлне çуракине пур енчен те лайăх хатĕрленсе çитме тăрăшаççĕ. Пур йышши культурăсем енĕпе те вăрлăх çителĕклĕ, ăна лайăх аласа тасатнă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ.

П. ЯКОВЛЕВ.

Строительсен ĕçри çĕкленĕвĕ

Шупашкарти Карл Маркс урамĕнче Чăвашпромсовет çуртне тăваççĕ. Кунта сивĕ кунсенче те ĕç чарăнса тăмасть.

...Тул çутăлса çитеймен-ха. Подъемнăй кранăн тăсланка çеккĕ улăха-улăха анни кăвак тĕтре витĕр инçетренех курăнать. Строительствăна кирпĕч, раствор, йывăç тиенĕ машинăсем пыра-пыра кĕреççĕ, раствор ăшăтакан çурт мăрьинчен тĕтĕм тухать. Çўлте, тăваттăмĕш хутра, каменщиксемпе платниксем ĕç вырăнĕсене тасатаççĕ. Пуртăпа каскалани, кирпĕче мастеркăпа шаккани илтĕнет. Яланхи пекех 8 сехетре ĕç пуçланать.

Бригадирсене нарядсем панă хыççăн Феоктистов прораб стройкăра тĕрлĕ материалсем мĕн чухлĕ пуррине шутласа пăхрĕ. Материалсем пĕтсе пынине вăхăтра сисмесен хыпăнса ўкме тивет, ĕç те чарăнса ларать. Чи кансĕрлекенни—раствор. Ăна машинăпа турттараççĕ. Вăхăтра тата кирлĕ таран кўрсе килсен çеç вăл илмĕн чухлĕ те сая каймасть.

Çамрăк прораб Шупашкарти стройкăсенче тăваттăмĕш çул кăна ĕçлет-ха. Апла пулин те ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пултарни курăнать. Вăл ертсе пыракан строительство участокĕ халĕ малта пырать.

Партин ХХ-мĕш съезчĕ умĕнхи ăмăртура строительсен ĕçри хастарлăхĕ нумай ўсрĕ. Стройкăри тĕп специалистсене—каменщиксене хĕллехи условисенче ĕçлеме чылай йывăр пулин те, вĕсем хăвăртлăха чакармаççĕ. Çакна виçĕ уйăх хушшинчи итогсем лайăх çирĕплетсе параççĕ. Сăмахран, октябрь уйăхĕнче 94,4 пин кирпĕч купаланă пулсан, ноябрьте—111,2 пин, декабрьте—155,6 пин кирпĕч купаланă.

Каменщиксен Александр Козлов ертсе пыракан бригади кулленхи нормăна яланах 125—130-шар процент тултарать. Хĕллехи кун кĕске пулин те, вĕсем нихçан та 8 сехетрен кая ĕçлемеççĕ.

— Пĕркун 32 градус сивĕ пулчĕ. Эпир пурпĕрех ĕçлерĕмĕр,—каласа парать Козлов юлташ.—Ăшă раствор çителĕклĕ парса тăрсан, сивĕ çанталăк каменщиксемшĕн чăрмав мар.

Строительсен ăсталăхĕ кулленех ўссе пырать. Кашни каменщик ăнăçлăрах, тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшать. Акă, Иван Краснов каменщик, куллен 1.000 кирпĕч купаламалла пулсан, 1.400—1.450 кирпĕч купалать. А. Чижовпа П. Шайкин та унтан юлмаççĕ. Вĕсем те кашни кунах çĕнĕ ўсĕмсем тăваççĕ.

Ыттисемпе юнашар çамрăк каменщик И. Семенов ĕçлет. Вăл строительствăна çулталăк каялла çеç килнĕ-ха. Малтанхи вăхăтра тĕрлĕ ĕçсем тăвакан рабочи пулнăскер, часах каменщике вĕренме тытăннă. Халĕ вăл та сменăри нормăна ирттерсе тултарать.

Тĕрлĕ ĕçсем тăвакан бригадăсем пĕрпĕринпе килĕштерни строительствăна ăнăçлă туса пыма май парать. Михаил Кокарев коммунист ертсе пыракан платниксем каменщиксем валли пусмасем, трапсем вăхăтра тăваççĕ. Иван Шувалов крановщик строительство площадкине кирлĕ материалсем йĕркеллĕ парса тăрать.

Ĕç кунĕ вĕçленсен каменщиксемпе платниксем, тĕрлĕ ĕç тăвакан рабочисем вăхăтлăха тунă çурта пухăнчĕç. Хĕрлĕ хăма çинче—паянхи итогсем. Участокра нормăна тултарман бригадăсем çук, строительсенчен нумайăшĕ сменăри задание 135—140 процент пурнăçланă.

Н. Феоктистов прораб чертеж çине пăхса ыран тумалли ĕçсем çинчен каласа ăнлантарать. Ыттисем ăна тимлĕн итлесе лараççĕ.

— Коммунистсен партийĕн ХХ-мĕш съезчĕ ячĕпе йышăннă обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе,—тет прораб,—пирĕн строительство хăвăртлăхне татах та ўстермелле.

Прораб вăрăм сĕтел тавралла ларса тухнă çынсем çине пăхса илчĕ.

— Эпĕ çапла шутлатăп: съезд тĕлне кирпĕч купаламалли ĕçе вĕçлеме пулатех. Кашни рабочи ĕçе чун-чĕререн юратса, тăрăшса тумалла, тата тухăçлăрах ĕçлемелле. Кам мĕнле шутлать? Пурнăçлама пултаратпăр-и çак задачăна?

— Пултаратпăр!

Коллективра 32 çын. Пурте пĕр кăмăллăн ырларĕç прораб сĕнĕвне. Вĕсем ăна пурнăçа кĕртессех.

Ўкерчĕк çинче: строительствăра ĕçлекен З. Николаевăпа А. Ивукова раствор пуштараççĕ.

Г. Зиньков фотоўкерчĕкĕ.

А. НИКОЛАЕВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Массăлла-политикăлла ĕçе куллен ертсе пыман çĕрте

Çак кунсенче КПСС Вăрмар райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Вăл районта политикăлла-массăлла ĕç япăхса кайнине палăртрĕ. Докладчика — КПСС райкомĕн секретарьне Д. Егоров юлташа чылай ыйтусем пачĕç.

— Райком секретарĕсем мĕншĕн колхозниксем валли докладсемпе лекцисем туса памаççĕ?

— Райкомăн пропагандăпа агитаци пайĕ мĕн тăвать?

— МТС-ри трактор бригадисенче массăлла-политикăлла ĕçе камăн туса пымалла?

Çак ыйтусем вĕсем КПСС Вăрмар райкомĕ политикăлла-массăлла ĕçе начар ертсе пыни çинчен калаççĕ.

Район ялхуçалăхĕ юлса пырать. Иртнĕ çулта кашни гектартан вăтам шутпа 9,1 центнер тĕштырă пухса илнĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхĕ ÿсни палăрмасть тесен те юрать. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче, сăмахран, кашни 100 гектар çĕр пуçне 27-шер центнер çеç сĕт илнĕ. Хĕле кĕнĕренпе ĕнесенчен сĕт суса илесси чакса пырать. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кашни 100 гектар çĕр пуçне 10,9 центнер аш-какай, вăл шутра сухалакан кашни 100 гектар çĕр пуçне 4,96 центнер сысна ашĕ туса илнĕ. Пĕлтĕр кашни чăхран 47-шер çăмарта кăна илнĕ. Район, пĕтĕмĕшпе илсен, сĕт, аш-какай, çăм, çăмарта хатĕрлемелли плана тултарман.

Парти райкомĕпе чылай пуçламăш парторганизацисене ялхуçалăхĕ юлса пыни хытă хумхантарма тивĕçлĕ, анчах çакă курăнмасть-ха. Кунта хăйсен ĕç результачĕсене КПСС Центральнăй Комитечĕн январьти Пленумĕн заданийĕсене кура мар, 1955 çулти ĕçе иртнĕ 3—4 çул хушшинчи пĕчĕк ÿсĕмпе танлаштарса, вăтам цифрăсемпе хаклама хăнăхнă. Сăмахран, пĕлтĕр виçĕмçулхинчен кашни ĕнерен вăтам шутпа 27-шер килограмм сĕт нумайрах суса илнине те кăмăллăн асăнаççĕ.

Районта вăйлă тырпул туса илекен, йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен колхозсем пур. «Дружба», Ленин ячĕпе, Мичурин ячĕпе тăракан тата «Динамо» колхозсен экономики çулсерен тĕреклензе пырать. Çак колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем ял ĕçченĕсене партипе правительство заданийĕсене пурнăçлама анăçлă мобилизацилеççĕ, вĕсем массăллаполитикăлла ĕçе кучухнехи задачăсемпе тачă çыхăнтарса пыраççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри агитколлективра 35 агитатор — дояркăсем, свиноводсем, малта пыракан ытти колхозниксем. Вĕсем фермăсенче, уй-хир бригадисенче докладсемпе калаçусем тăтăшах ирттереççĕ. Нумаях пулмасть Казаков зоотехник выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарасси çинчен калаçу ирттернĕ. Вăл малта пыракан доярккăсен паха ĕçĕпе ытти работниксене паллаштарнă, çав вăхăтрах начар ĕçлекенсен çитменлĕхĕсене кăтартса панă. Ĕçри кăлтăксене вăхăтра палăртни ферма работникĕсене пулăшнă. Халĕ выльăхсене аван пăхаççĕ. Ĕнесенчен сĕт нумайрах суса илеççĕ.

Фермăра хĕрлĕ кĕтес уçнă. Унта тĕрлĕ кĕнекесем, хаçат-журналсем чылай. Кăтарту хăми пур. Уйрăм дояркăсем кашни уйăхра, вунăкунлăхра, куллен мĕн чухлĕ сĕт суса илнине пĕлсе тăраççĕ. Колхоз правленийĕпе парторганизаци партин XX-мĕш съезчĕ умĕнхи социализмла ăмăрту итогĕсене кашни вунă кун хыççăн пăхса тухаççĕ.

Колхоз производствин кашни участокĕнчех агитаторсен ĕçĕ палăрать. Стена хаçачĕ ял ĕçченĕсен пурнăçне тăтăшах çутатать.

«Дружба», Мичурин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсенче те массăлла-политикăлла ĕçе начар мар йĕркеленĕ. Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, райком массăлла-политикăлла ĕçе начар ертсе пырать.

Районта пĕтĕмпе 31 агитколлектив, вĕсенче 800 агитатор ытла. Ку вăл пысăк вăй. Тÿрех каламалла, парти райкомĕ агитколлективсене конкретлă тата оперативлă ертсе пымасть. Тĕп çитменлĕхсенчен пĕри вăл—пуçламăш парторганизацисем массăлла-политикăлла ĕçе пурнăçран уйрăм туса пыни, ăна ялхуçалăх производствипе тачă çыхăнтарса пыма пĕлменни.

Районти колхозсем выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма начар хатĕрленнĕ. Сĕтеклĕ апатсем çителĕксĕр. Чылай колхозсенче выльăхсене утă-улăма вĕтетмесĕр тата пăспа çемçетмесĕр çитереççĕ. Акă, «Свобода» колхозах илер. Ку ялхуçалăх артелĕнче выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илесси вăраххăн ÿссе пырать. Ферма работникĕсем хушшинче политикăлла агитацие кирлĕ пек организацилемен, вĕсем сайра хутра кăна докладсемпе калаçусем итлеççĕ.

«Победа» колхозра та çавăн пекех. Кунта ĕне тата сысна фермисем ялтан аякра вырнаçнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе туса пыма уйăрнă агитаторсен ĕçне, чăннипе илсен, никам та ертсе пымасть. Иртнĕ çулхи октябрĕн 1-мĕшĕпе кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне кашни ĕнерен 74-шар литр çеç сĕт суса илнĕ.

— Ĕнесене утă-улăмпа кăна тăрантаратпăр. Шыва та ăшăтса параймастпăр,— ÿпкелешет колхоз председателĕ Бойков.

Фермăсем патĕнче тислĕк нумай купаланса выртать. Ăна уй-хире вăхăтра кăлармаççĕ. Фермăсенче ытти йĕркесĕрлĕхсем те сахал мар, анчах парторганизаци секретарĕ Бондарева, райкомăн МТС енĕпе ĕçлекен инструкторĕ Захаров юлташсем выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ.

Колхозра çулталăк каялла 42 çынтан тăракан агитколлектив пулнă. Халĕ вĕсенчен чылайăшĕ урăх çĕре ĕçлеме кусна. Парторганизаци агитколлектив составне çĕнĕрен пăхса тухса çирĕплетмен. Савăнпа СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕн материалĕсене ял çыннисене ăнлантарса паман, агитаторсен семинарне ирттерменни чылай пулать. Колхозра стена хаçачĕ сайра хутра, уяв кунĕсем умĕн кăна тухать. Массăлла-политикăлла ĕçе лайăхлатасси çинчен парти пухăвĕнче чылайранпа сÿтсе явман. Çĕнĕ Кавалти вулав çурчĕ колхозниксен культурăлла ыйтăвĕсене тивĕçтерейместь. Вулав çурчĕн заведующийĕ Андронникова юлташ фермăсенче пулмасть. «Пионер», «Гвардеец», Чапаев ячĕпе тăракан, «30 лет Чувашии» колхозсенчи агитколлективсем те начар ĕçлеççĕ.

Ялсенчи массăлла-политикăлла ĕçе КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ (заведующийĕ И. Егоров юлташ) конкретлă ертсе пымасть. Иртнĕ çулта агитаторсен районти канашлăвне ирттермен. Агитколлективсене ертсе пырас ĕçе пĕтĕмпех пуçламăш парторганизаци секретарĕсем çине тиенĕ, анчах вĕсене пропагандăпа агитаци пайĕ тивĕçлипе пулăшмасть, пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем ĕçе хăйсем пĕлнĕ пек йĕркелеççĕ. Хăшпĕр парторганизацисем, сăмахран, «Авангард» колхозра, артель производствинче палăрман, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнă хăшпĕр çынсене агитаторсем пулма çирĕплетнĕ. Çав вăхăтрах политикăлла агитацие туса пыма дояркăсене, свиноводсене, ялхуçалăх специалисчĕсене сахал хутшăнтарнă.

Парти райкомĕ массăлла-политикăлла ĕçе плансăр туса пырать. Докладчиксем вырăнти материалсемпе сахал усă кураççĕ. Пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Егоров юлташ хăй те иртнĕ çулта районти колхозсем аш-какай, сĕт-çу, çăмарта мĕн чухлĕ туса илнине пĕлмест.

Штатра тăман докладчиксемпе лекторсене инструктаж парассине начар йĕркеленĕ. Райком библиотекинче район хуçалăхĕпе культури мĕнле аталанса пынине кăтартакан материалсем çук. Диаграммăсем, витринăсем туман. Агитаторсем валли ялан ĕçлекен семинар организацилемен. Райком бюровĕ юлашки вăхăтра лайăх ĕçлекен пĕр агитколлективăн ĕçне те пăхса тухман.

Парти райкомĕн работникĕсем хĕле кĕнĕренпе колхозсенче сайра хутра кăна пулаççĕ. Райком секретарĕсем Алексеевпа Антонов юлташсем, райисполком руководителĕсем те колхозсенче политикăлла ыйтусем тăрăх докладсем туман. Райисполкомăн культура пайĕн заведующийĕ Горбунова юлташ, çемье тата юрату ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем вуланисĕр пуçне, ытти ыйтусемпе халăх хушшинче докладсем тумасть.

Районта наглядлăй агитацие хакламасçĕ. Район центрĕнче, «Свобода» колхозра ик-виçĕ çул каялла çырнă плакатсемпе лозунгсем çакăнса тăраççĕ, Хăшпĕр колхозсенче, уйрăмах фермăсенче, Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съездне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме чĕнсе калакан лозунгсемпе плакатсем пачах çук.

Халĕ выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарнине пĕрлех, çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленмелле. Калас пулать, нумай колхозсенче вăрлăх, уйрăмах çĕрулми вăрлăхĕ çителĕксĕр. «Пионер», Чапаев ячĕпе тăракан, «Ударник», «Гвардеец» колхозсенче çĕрулми вăрлăхĕ лартма кирлинчен çурринне яхăн та хывса хăварман. Уй-хире тислĕк кăларасси чылай çĕрте япăх пырать. «Родина» колхозра вара тислĕке пĕр çĕре купаламаççĕ, уя кăларса сапаласа тăкаççĕ.

Район пĕлтĕр пĕрремĕш хут кукуруза массăллăн акса хăварнă. Ленин ячĕпе тăракан колхозсăр пуçне, агротехникăна пăхăнман пирки кукуруза пур çĕрте те тенĕ пекех тухăçсăр пулнă. Кăçал районта кукуруза акмалли лаптăка 5 пин гектар таран çитерме палăртнă. Агитацилле-массăлла ĕçе хальхи пек ячĕшĕн кăна туса пырсан, паллах, кăçал та иртнĕ çулхи йăнăшсем пулмĕç теме хĕн. Райком колхозсенче кукуруза акса тăвас енĕпе малта пыракан опыт çинчен докладсем ирттересси́не организацилемен. Уйрăм работниксем, вăл шутра хăшпĕр колхоз председателĕсем те, кукурузăна хакламанни сисĕнет. Агитаторсен шăпах ĕнтĕ çавăн пек сиенлĕ шухăш-кăмăла хирĕç кĕрешмелле.

Механизаторсем хушшинчи массăллаполитикăлла ĕç çителĕксĕр пулса пыратьха. МТС-ра КПСС XX-мĕш съезчĕ умĕнхи социализмла ăмăрту итогĕсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Механизаторсем хушшинче ĕç дисциплини япăх.

Вăрмар районĕнчи парторганизаци хăйĕн организаторла тата массăлла-политикăлла ĕçне вăйлатмалла, ăна умра тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас тĕллевпе туса пымалла, ял ĕçченĕсене вăйлă тырпулшăн, тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн пыракан кĕрешĕве анлăн мобилизацилемелле.

Н. ГЕРАСИМОВ.
В. ПЕТРОВ.
(«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн спецкорĕсем).

Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи пир-авăр пахалăхне тĕрĕслекен цехра ĕçлекен Ольга Владимирова сменăри нормăна яланах ирттерсе тултарать.
Ÿкерчĕк çинче: О. Владимирова работница хатĕр продукци çине штамп лартать.
И. Никифоров фотоÿкерчĕкĕ.

Библиотека пропагандистсене пулăшать

КПСС Улатăр хула комитечĕн библиотеки пропагандистсен ĕçĕнчи лайăх опыта пĕтĕçтерес тата ăна мĕнпур пропагандистсем хушшине сарас, кружоксемпе политшкулсен тата агитколлектив руководителĕсен теорилле пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерет. План тăрăх кашни уйăхрах пропагандистсен семинарĕн занятийĕсем пулаççĕ. Унта теорилле тата методикăлла ыйтусем тăрăх лекцисем итлеççĕ. Методикăлла ыйтусем тăрăх пулакан занятисем уйрăмах интереслĕ, активлă иртеççĕ. Пропагандистсем пĕр-пĕрин опычĕпе паллашаççĕ. Нумай пулмасть пулнă занятире калаçу ирттересси, наглядлăй пособисемпе усă курасси тата хальхи вăхăтри политикăна вĕренессине кружоксемпе семинарсенче йĕркелесси çинчен тĕплĕн сÿтсе явнă.

Хулари пропагандистсем библиотекăра ирттерекен семинар занятийĕсемпе консультацисене йĕркеллĕ çÿреççĕ. Сăмахран, Косынкин, Митрофанов, Комин, Фролов юлташсем занятисенче тăтăшах пулаççĕ, хăйсен теорилле пĕлĕвĕпе методикăлла ăсталăхне ÿстереççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем ертсе пыракан кружоксен занятийĕсем яланах интереслĕ тата пысăк активлăхпа иртеççĕ.

Марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем ĕçрен тухсан парти библиотекине пыраççĕ. Вĕсем хушшинче час-часах хулари 39-мĕш вăтам шкул учителĕсене Кузнецовăпа Скляр юлташсене, пăравуссем юсакан заводри главнăй инженера Кожухов юлташа, Корендясов, Гусякова тата ытти юлташсене те курма пулать.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли библиотекăра темиçе цикл тăрăх лекцисем ирттереççĕ. Çавăн пекех партипе хуçалăх активĕ, докладчиксемпе агитколлектив руководителĕсем тата агитаторсем валли тăтăшах лекцисем пулаççĕ. Агитаторсем валли кашни уйăхрах докладсемпе калаçусен тематикине тăваççĕ, кирлĕ материалсемпе вырăнти тĕслĕхсем пухса параççĕ.

Анчах партин хула комитечĕн библиотеки çителĕклĕ ĕçлет теме çук-ха. Вăл хулара идеологилле ĕçе туса пыракансен пĕр пайĕпе çеç ĕçлет. Чылай пропагандистсемпе консультантсем, сăмахран, Робинович, Корнилов, Антонов юлташсем, семинар занятийĕсене çÿремеççĕ.

В. СТЕКЛОВ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕнче

Республикăри районсем 1955 çулта колхозсенче выльăх витисем тăвас енĕпе социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен

Колхозсенчи строительство ĕçĕсен итогĕсене пăхса тухса Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ çапла йышăннă:

Выльăх витисем тăвас енĕпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Канаш районне памалла. Канаш районĕ выльăх витисем тумалли çулталăк планне 187,0 процент тултарнă, вăл шутран: лаша витисем тумалли плана 123,0 процент, ĕне витисем—105,0 процент, пăру витисем—114,0 процент, сысна витисем—200 процент, сурăх витисем—277 процент, кайăк-кĕшĕк çурчĕсем—100,0 процент тата силос сооруженийĕсем тумалли плана 108,0 процент тултарнă.

Колхозсенчи строительство енĕпе Çĕрпÿ, Муркаш, Етĕрне, Ишлей тата Чурачăк районĕсем лайăх ĕçленине палăртнă. Çак районсенче выльăх витисем тумалли плана 102—163 процент таран, кайăк-кĕшĕк çурчĕсем тумалли плана 100—150 процент таран тултарнă.

Выльăх витисем тăвас, строительство материалĕсем туса хатĕрлес енĕпе колхозсем тата районсем хушшинчи социализмла ăмăрту условийĕсене 1956 çулшăн та малтан йышăнни пекех хăвармалла тунă. Ăмăрту итогĕсене кашни квартал тăрăх палăртса пыма йышăннă.

Шкул ĕçне лайăхлатмалла

МУРКАШ. Вĕренÿ çулĕн малтанхи çур çулĕнче районти шкулсемпе учительсен коллективĕсем вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнче хăшпĕр çитĕнÿсем тунă. Анчах та шкулсен ĕçĕнче çав-çавах пысăк çитменлĕхсем пур. Вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çур çулĕнчи итогсем çакна кăтартса параççĕ: чылай шкулсенче партипе правительство çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе лартнă задачăсене начар пурнăçласа пыраççĕ. Хăшпĕр учительсем вĕренекенсене çирĕп те тарăн пĕлÿ парас, кашни урока идейăпа теори тата методика тĕлĕшĕнчен çÿлти пусăмра ирттерес, вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепне тататкланах чакарас енĕпе çине тăрса кĕрешмеççĕ. Хальхи вăхăтра районти шкулсенче вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ 8,6 процента яхăн (пурĕ 255 ача) шутланать. Вĕрентÿпе воспитани ĕçне уйрăмах Чуманкассинчи, Шурчари çичĕ çул вĕренмелли тата Муркашри вăтам шкулсенче çителĕксĕр йĕркеленĕ. Чуманкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ Вязов юлташ) кашни çĕр ачаран вунпиллĕкĕшĕ вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймасть. Районти шкулсенче вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ уйрăмах 6-мĕш, 8-мĕш тата 10-мĕш классенче пысăк. Чылай шкулсенче вырăс чĕлхипе математикăна тата историе начар вĕренеççĕ.

Районта всеобуч законĕ çителĕксĕр пурнăçланса пырать.

Вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнчи çитменлĕхсем районти çутĕç пайĕ шкулсемпе учительсен ĕçне куллен-кун тĕрĕслесе, пулăшса тăманнинчен чылай килет. Шкулсенче учительсен ĕçне тĕрĕслессине начар йĕркеленĕ, директорсемпе вĕренÿ пайĕн заведующийĕсем уроксенче сахал пулаççĕ.

Районта политехникăлла вĕренĕве пурнăçласси те çителĕксĕр пулса пырать. Чылай шкулсенче мастерскойсем ÿсассине вăраха яраççĕ, техникăлла кружоксем çук, сăнавпа практикăлла ĕçсене начар йĕркеленĕ.

Учительсен канашлăвĕнче çутĕç пайĕн заведующийĕ Н. Яковлев юлташ хăйĕн докладĕнче вĕрентÿпе воспитани ĕçĕ мĕнле пыни çинчен сахал мар каларĕ, анчах та шкул пурнăçĕнчи кирлĕ ыйтусене чылайăшне сутатмасăр хăварчĕ. Сăмахран, докладчик çĕнĕ вĕренÿ çулĕнчен пуçласа VIII—X-мĕш классенче ялхуçалăхне, машиноведение, электротехникăна вĕренмелли практикумсем ирттерме хатĕрленесси мĕнле пырать, шкулсем валли кирлĕ оборудовани тупса парас тĕлĕшпе мĕн тунă—çаксем çинчен нимех те каламарĕ. Çавăн пекех ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе ĕçлес ыйтăва та манăça хăварчĕ. Çав вăхăтрах районти шкулсенче пĕринче те вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсен комитечĕсем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ.

Канашлу вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мероприятисем ирттерме палăртрĕ.

П. ПАВЛОВ.
(Хамăр корр.).

1955 ÇУЛХИ ОКТЯБРЕН 1-МЕШЕНЧЕН ПУÇЛАСА 1956 ÇУЛХИ ЯНВАРЕН 1-МЕШЕ ТЕЛНЕ КАШНИ 100 ГЕКТАР ÇЕР ПУÇНЕ АШ-КАКАЙ ТУСА ИЛНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Кашни 100 гектар çĕр пуçне аш-какай илнĕ (центнерпа)	Вăл шутран сухалакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне сысна ашĕ илнĕ (центнерпа)	Миçе сысна самăртнă	Миçе сысна самăртма тăратнă
Вăрнар	13,5	7,4	2.651	77
Ишлей	10,5	4,5	774	205
Красноармейски	9,7	5,0	1.615	647
Шăхасан	9,7	4,1	1.198	324
Çĕрпÿ	9,2	5,1	1.707	876
Çĕмĕрле	8,9	4,3	617	216
Калинино	8,8	4,8	1.427	190
Комсомольски	8,8	4,1	1.437	511
Чкаловски	8,7	3,6	1.563	116
Елчĕк	8,4	3,6	1.668	722
Етĕрне	8,3	4,7	931	226
Тăвай	8,3	4,0	1.066	323
Муркаш	8,1	4,5	1.416	1.015
Чурачăк	7,7	4,4	1.264	109
Сĕнтĕр	7,6	3,2	501	143

Районсем	Кашни 100 гектар çĕр пуçне аш-какай илнĕ (центнерпа)	Вăл шутран сухалакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне сысна ашĕ илнĕ (центнерпа)	Миçе сысна самăртнă	Миçе сысна самăртма тăратнă
Элĕк	7,5	4,1	733	328
Вăрмар	7,4	3,1	2.233	119
Канаш	7,4	3,6	863	184
Октябрьски	7,3	3,9	571	161
Шупашкар	7,1	3,4	640	200
Сĕнтĕрвăрри	6,9	3,2	255	20
Улатăр	6,8	3,0	516	286
Советски	6,8	4,1	914	633
Первомайски	6,4	3,3	972	65
Йĕпреç	6,2	2,4	738	52
Хĕрлĕ Чутай	6,2	2,5	687	40
Пăрачкав	5,4	2,6	676	340
Куславкка	5,1	2,3	590	391
Шăмăршă	4,5	1,6	403	28
Кувакино	3,5	1,4	424	62

Кукуруза—тĕштырă тата паха выльăх апачĕ

С. КОРОТКОВ.
Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ.

1954 çул пуçламăшĕнче эпĕ Мускавра пултăм, унта КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕпе Никита Сергеевич Хрущев юлташпа курса калаçрăм. Хрущев юлташ Чăваш АССР-ĕнчи çутçанталăк условийĕсем çинчен ыйтса пĕлчĕ, кукуруза акма сĕнчĕ.

Хрущев юлташ сĕнĕвне пирĕн колхозниксем хапăл туса йышăнчĕç. Малтанхи çул кукурузăна эпир 35 гектар çине акрăмăр.

1955 çулта эпир кукурузăна 240 гектар е 1954 çулхинчен çичĕ хут ытларах акрăмăр.

Иртнĕ çул çанталăк начартарах тăчĕ. Çавна май, япăх пăхса ÿстернĕ çĕрте кукуруза тухăçсăр пулчĕ е пачах та пĕтсе ларчĕ. Кун пек çĕрте вара хăшпĕр ялхуçалăх специалисчĕсем иккĕленме те пăхрĕç. «Кукуруза акса çĕре ахалех сая ятăмăр», теекелерĕç вĕсем. Анчах мĕншĕн-ха, эппин, çав çулхинех чылай колхозсем тухăçлă кукуруза туса илчĕç? Çакă вăл пĕтĕмпех агротехника хушнисене çирĕп пăхăнса ĕçленинчен килет ĕнтĕ. Пирĕн колхозра иртнĕ çул та кукуруза виçĕ метр çÿлĕшне çити ÿсрĕ, ăнса пулчĕ.

Иртнĕ çул августăн 31-мĕшĕнче кăсхине тăм ÿкрĕ, çавна пула кукуруза малалла ÿсеймерĕ. Апла пулин те эпир ăна чылай тухăçлă пухса кĕртрĕмĕр, уйрăм участоксенче кукуруза тĕшши те пулса çитрĕ.

Пĕтĕм лаптăк çинчи кукурузăран эпир 60 гектарне ĕнесене çуллахи вăхăтра симĕсле çулса çитерме уйăртăмăр, 180 гектар çинчи кукурузăран силос хыврăмăр. Иртнĕ çул пурĕ 8 пин тонна — е Нуславкка районĕнчи пĕтĕм колхозсенчен виçĕ хут ытларах—силос хывса хăвартăмăр. Ĕнесене хальхи вăхăтра талăкне 35—40 килограмм паха силос çитеретпĕр. Кукуруза силосĕпе тата ытти паха апатпа тăрантарнине пула ĕнесенчен сĕт суса илесси чылай ÿсрĕ. Çĕнĕ хуçалăх çулĕнчи октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче малтанхи çулхи çав вăхăтринчен пурĕ 20 пин литр ытларах сĕт суса илтĕмĕр; сĕт çуллăхĕ 5—6 процента çитрĕ.

Кукуруза—тухăçлă культура. Иртнĕ çул, акă, эпир 40 гектар лаптăк çинчен кашни гектар пуçне 600-шер центнер симĕс масса пухса кĕртрĕмĕр. 100 килограмм кукуруза силосĕ тутă тытас енĕпе пĕр пăт сĕлĕпе танлашать. Апла пулсан, кукуруза акнă кашни гектар çĕр пире 50 центнер сĕлĕ панă. Уйрăм участоксенчен эпир кукурузăна 600—800 центнер таранччен туса илтĕмĕр.

Кукуруза акса тăвасси колхозсенче тĕп вырăнта тăмалла. Кукуруза ÿстермесĕр тĕштырă нумайрах туса илме те, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлеме те çук. Ахальтен мар ĕнтĕ, кукуруза вăл—тĕштырă, аш, сало, сĕт, тесçĕ халăх хушшинче.

Кукуруза агротехникине эпир мĕнле пурнăçласа пыратпăр-ха?

Тухăçлă кукуруза ÿстерес ĕçре çĕр суйласа илесси, ăна хатĕрлесси тата çемçетесси пысăк вырăн йышăнать. Кукуруза валли эпир чи лайăх çĕрсене—Потаушкăпа Кушлавăш шывĕсем хĕрринчи лаптăксене суйласа илтĕмĕр. Малтанхи çулсенче унта сурхи тулăпа ыраш акнă, çĕрулми тата пахча çимĕçсем лартса тунă. Çав лаптăксене эпир кашни çулах гектар пуçне 40 тонна тислĕк кăларнă, çурхи тулăпа ыраш калчине çурккуннехи вăхăтсенче минераллă удобренисем сапса апат панă. Кашни гектар калча çине 7,0 центнер минераллă удобрени сапнă.

Кĕркунне эпир çĕре предплужниклă плугсемпе 30—35 сантиметр тарăнăшне сухаласа хăвартăмăр. Суркуннепе ăна «зиг-заг» йышши йывăр сÿресемпе икĕ хутчен сÿрелерĕмĕр. Кĕрхи сĕртмене 10—12 сантиметр тарăнăш культиваци турăмăр. Ун умĕн кашни гектар çине пĕрер центнер аммиак селитрипе кали тăварĕ тата икĕ центнер суперфосфат кăларнă. Акас умĕн вăрлăх пăрахса хăвармалли тарăнăшне çити иккĕмĕш хут культиваци тунă.

Эпир кукурузăн «успех», «осетинская белая зубовидная», «харьковская» тата «закарпатская» сорчĕсемпе акса хăвартăмăр. Уйрăм лаптăксене хамăр малтанхи çул туса илнĕ вăрлăхпа та акрăмăр.

Кукурузăна вăхăтра тата лайăх акса хăварма тăрăшмалла. Иртнĕ çул эпир ăна тăпрара 5—6 сантиметр тарăнăшĕнче 8—10 градус, сывлăшра 10 градус ăшă тăнă чухне акма тытăнтăмăр. Опыт çакна кăтартса пачĕ: пирĕн республика условийĕсенче кукурузăна майăн 3-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче акмалла. Анчах кукуруза акмалли срока кашни колхозра вырăнти условисене, тăпра пиçсе çитнине курса палăртмалла. Маларах акса е ирттерех акма юрамасть, вăл сиен çеç курат.

Кукурузăна акас умĕн эпир лаптăксене трактор культиваторĕсемпе тата маркерсемпе йĕр туса тухрăмăр. Акнă чухне шăтăкпа шăтăк хушшине 70 сантиметр хăварнă. Çапла вара кашни гектар çине 22-шер килограмм вăрлăх кĕчĕ.

Акас ĕçе çапла йĕркелерĕмĕр. Малтан пĕр колхозник шăтăксене витрен тăваттămĕш пайĕ чухлĕ çĕрĕк тăпра тата суперфосфат хурса хăварать, ун хыççăн иккĕмĕш çын çав удобренисене тăпрапа лайăх хутăштарать, кăпкалатать, виççĕмĕшĕ вара шăтăксене вăрлăх пăрахса пырать. Эпир кашни шăтăка тăваттшар вăрлăх пăрахнă.

Украина ССР-ĕнчи кукуруза ăстисен—Социализмла Ĕç Геройĕсен опычĕ çакна кăтартса пачĕ: хире кăларнă кашни тонна тислĕк пуçне пĕрчĕллĕ тĕштырăсен тухăçлăхĕ 50 килограмм таранччен хутшăнать пулсан, кукуруза тухăçлăхĕ вара икĕ центнер е ытларах та хутшăнать.

1956 çулта эпир кукурузăна 250 гектар çине акатпăр. Удобренисемпе кăçал та анлăн усă курма палăртнă. Малтанхи хут культиваци тăвас умĕн кашни гектар çине 80-шар тонна юшкăн тата 7—8-шар центнер минераллă удобрени кăларатпăр, акнă чухне шăтăксене витрен тăваттăмĕш пайĕ чухлĕ çĕрĕк тăпри хурса пыратпăр. Çĕре лайăх çемçетни тата кукурузăна лайăх пăхса ÿстерни пире кашни гектартан 150 центнер кукуруза пуçĕ тата 1.000 центнер симĕс масса пухса кĕртма май парĕ. Çакăншăн пĕтĕм вăя хуратпăр та ĕнтĕ эпир.

Хăшпĕр учебниксенче тата агроправилăсенче кукурузăна 8—10 сантиметр тарăнăшне акса хăварма сĕннĕ. Пирĕн патра тăпра майĕпен пиçсе пырать, кукурузăн вегетаци вăхăчĕ 90 куна çитет, çавăнпа та ку сĕнÿпе килĕшмех те çук пулĕ. Эпир кукурузăна çÿлте асăннă тарăнăшне пăрахса хăварман чухне те вăл лайăх çитĕннине, унăн тымарĕсем лайăх аталаннине куртăмăр. Çавăнпа та вăрлăха мĕн тарăнăшне пăрахса хăварасси вырăнти условисенчен килет. Иртнĕ çуркунне çанталăк сивĕрех тăчĕ. Апла пулин те республикăри уйрăм колхозсем кукурузăна 8—10 сантиметр тарăнăшне акрĕç. Вĕсен вара кукуруза шăтмарĕ, е шăтсан та начар ÿсрĕ. Эпир иртнĕ çул вăрлăха 3—4 сантиметр тарăнăшне пăрахса пытăмăр, вăл лайăх ÿсрĕ, мĕншĕн тесен тăпран çиелти сийĕнче ун валли ăшă çителĕклĕ пулчĕ.

Пирĕн колхозниксем кукурузăна пăхса ÿстерес ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ. Акнă хыççăнах эпир кукурузăна куракансенчен сыхлама хуралсем тăрататпăр. Çавăн пекех, тĕрлĕрен хăратмалли япаласем çакса хуратпăр. Сăмахран, çапла турăмăр. Кукуруза акнă лаптăксем тăрăх икĕ метр çÿлĕш юпасем лартса тухрăмăр, вĕсенчен шпагат картăмăр, шпагатсем çине кашни 10—20 метртан тольсем (хытă хутсем) çакса тухрăмăр. Çак хутсем çилпе сиккеннинчен куракçем хăраççĕ, кукуруза патне анса лармаççĕ. Çапла, кукурузăна виçĕ-тăватă çулçă кăларичченех куракансенчен сыхлатпăр.

Иртнĕ çул пирĕн колхозниксен кукурузăна пăхса ÿстерес енĕпе уйрăмах хытă ĕçлеме тиврĕ. Час-часах çумăр çунипе тăпран çиелти сийĕ хытса ларчĕ. Çакă вăл кукурузăна ÿсме хытах чăрмантаратчĕ. Анчах пирĕн колхозниксем механизаторсемпе пĕрле тăпрана çийĕнчех кăпкалатса тухрĕç, кукуруза лайăх шăтрĕ. Кукуруза калчисене малтанхи хут «СТЗ-7» трактор культиваторĕсемпе урлă тата тăрăхла майĕ 12—14 сантиметр тарăнăшне çити кăпкалатса тухрăмăр. Кун хыççăн шăтăксенчи кукуруза калчисене сайралатрăмăр, шăтăксен таврашĕсене катмаксемпе кăпкалатрăмăр. Ретсем хушшине сумкурăксенчен таса тытнă, çу каçиччен вĕсене пурĕ 3—4 хутчен кăпкалатнă.

Кукурузăна ÿснĕ вăхăтра тутлăхлă япаласем — азот тата фосфор уйрăмах нумай кирлĕ. Çавăнпа та эпир калчасене удобренисем çителĕклĕ сапса апат пама тăрăшатпăр. Калчасем мĕн чухлĕ ÿснине кура, малтанхи хутĕнче кашни гектар пуçне 0,7—1,0 центнер аммиак селитри, 1—1,5 центнер суперфосфат панă. Вырăнти удобренисемпе апатлантарни те питĕ усăллă. Кашни гектар пуçне 6—7 тонна тислĕк шывĕ, 4—5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ сапма юрать. Лайăх пăхса ÿстерни кăна пире тухăçлă кукуруза туса илме пулăшрĕ. Эпир кашни гектар çинче вăтам шутпа 60 пине яхăн кукуруза тÿни пăхса ÿстертĕмĕр. Кукурузăна эпир унăн тунисем симĕс, пуçĕсене хупласа тăракан çулçисем саралма пуçланă вăхăтра пухса кĕртетпĕр. Ытлашши ир пухса кĕртнин те усси çук, мĕншĕн тесен пуçĕсем сĕт пек пиçсе хытиччен кукуруза çаплах-ха тутлăхлă япаласем пухать. Ăнса пулнă кукурузăна кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртме пирĕн колхозниксемпе механизаторсем пысăк вăй хучĕç. Иртнĕ çул малтанхи хут кукуруза пухса кĕртнĕ çĕрте трактор косилкисемсĕр пуçне «СК-2,6» комбайнпа усă куртăмăр. Тăм тивнĕ пирки кукурузăна сентябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче, симĕс массипе пуçĕсене пĕрле пухса кĕртрĕмĕр, ăна çийĕнчех силоса хыврăмăр.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, Чăваш республикинчи ялхуçалăх ĕçченĕсене КПСС XX-мĕш съезчĕ ячĕпе социализмла ăмăрту анлăн сарса яма чĕнсе, пысăк обязательствăсем йышăнчĕç, çĕнĕ çулта кашни гектартан вăтам шутпа 30,0-шар центнер, пурĕ 30 пин центнер тĕштырă пухса кĕртме, кашни 100 гектар çĕр пуçне 260 центнер сĕт, 65 центнер аш илме сăмах пачĕç. Çак обязательствăна ăнăçлă пурнăçлама колхозниксем пĕтĕм вăйне хураççĕ, съезд уçăлас кун тĕлне çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитме тăрăшаççĕ.

Агитаторсене пулăшма

Республикăри промышленность ўсĕм çулĕ çинче

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх коммунизм строительстви историйĕнче пысăк вырăн йышăнать. Çĕршыври халăх хуçалăхĕ, уйрăмах йывăр промышленность, чаплă çитĕнўсем турĕ. Совет çыннисем çав çĕнтерўсемшĕн чун-чĕререн савăнаççĕ, малашне тата тухăçлăрах ĕçлеме пулаççĕ. Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съездне чыслăн кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Пĕтĕм çĕршыври пекех, Чăваш республикин экономики, уйрăмах промышленность хăвăрт аталанать. Малашне промышленность умĕнче тата пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Ана çак страницăри материалсенчен те лайăх курма пулать.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, еслă вырăс халăхĕ тата тăванла ытти халăхсем пулăшнипе пирĕн республика та пысăк ўсĕмсем турĕ. Иртнĕ пилĕкçуллăхра республикăри промышленность планран ирттерсе 300 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Шупашкарти электроаппаратура завочĕ Тăван çĕршывăн ответлă заданийĕсене çулсеренех чыслă пурнăçлать. Вăл туса кăларакан аппаратсене Мускаври метрополитенра, Донбасри шахтăсенче, Куйбышев гидроэлектростанцийĕнче тата ытти çĕрте те курма пулать. Халăх демократи çĕршывĕсене те электроаппаратсем сахал мар ăсатнă. 1955 çулта завод, 1950 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут нумайрах продукци туса кăларчĕ. Халăх хуçалăхĕ валли пĕренепе хăма, пурăнмалли çуртсем чылай панă. Хăма çуракан заводсем, сăмахран, куллен 2-шер пин кубометр хăма çураççĕ, вăрманпромхозсем кашни талăкра 9 пин кубометра яхăн йывăç турттарса кăлараççĕ. Çав йывăçран пысăк пайне шахтăсене, рудниксене, стройкăсене, хутпа сĕтел-пукан тăвакан предприятисене ăсатнă. Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕпе Вăрмарти сĕтел-пукан фабрикин продукцине Тăван çĕршывăн тĕрлĕ хулисемпе районĕсенче туянаççĕ. Сĕтел-пукан туса кăларасси икĕ хут ытла ўснĕ.

Иртнĕ пилĕкçуллăхра пирĕн промышленность çĕнĕ йышши япаласем—çуçса сўрекен автомастерскойсем, кăткăс электроаппаратсем, кĕпе çĕвакан машинăсем, электроплиткăсем, хуткупăссемпе баянсем туса кăларма тытăнчĕ.

Республика экономикине малалла аталантарас ĕçре уйрăмах Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн пĕрремĕш черетне ĕçе яни пысăк вырăн йышăнать. 1955 çулта комбинат 45 миллион метра яхăн пир тĕртсе кăларчĕ. Кашни сакăр кунта пĕр миллион метр!

Республикăри промышленность халăха куллен кирлĕ таварсем—чăлха-носки, çĕленĕ япаласем, ată-пушмак, йĕлтĕр, кирпĕч, савăт-сапа нумайрах туса кăларма тытăнчĕ.

Промышленность предприятийĕсен çĕçĕнчи чи паха енсенчен пĕри вăл—ĕç тухăçлăхĕ пĕрмаях ўсни. Пилĕкçуллăх хушшинче продукци туса кăларасси 94 процент ўснĕ, рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен шучĕ вара 25 процент çеç нумайрах пулнă.

Пилĕкçуллăхра продукци туса кăларасси ўснĕ

Электроэнерги



Электроаппаратура

Кирпĕч



Предприятисенче техникăна лайăх пĕлекен, пуçарулла та пултарулла кадрсем ўссе çитĕнчĕç. Пиншер рабочи пилĕк çуллăх нормăна срокчен тултарчĕç. Вуншар новаторсен паха тĕслĕхĕсене республика тулашĕнчи ĕççыннисем те пĕлеççĕ. Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи паллă рабочисен Королевпа Николаева, вăрман промышленноçĕнчи паллă тракторист-трелевщик Сысуйкин юлташсен тата ытти вуншар новаторсен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе кĕнекесем, плакатсем пичетлесе кăларнă. Электроаппаратура заводне, пир-авăр комбинатне чылай çĕртен студентсем практикăна килеççĕ. Техника ытăвĕсем тăрăх çав предприятисенче Пĕтĕм Союзри конференцисем, канашлусем пулса иртрĕç.

ĔÇ ТУХĂÇЛĂХНЕ ЎСТЕРНИ—ПРОИЗВОДСТВĂНА АТАЛАНТАРМАЛЛИ МЕСЛЕТ

Республикăри промышленность ĕç тухăçлăхне ўстерес тĕлĕшпе чылай ўсĕмсем турĕ. 1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, вăтам шутпа кашни рабочи пуçне 59 процент нумайрах продукци туса кăларнă. Союзри министерствăсене пăхăнса тăракан предприятисем малта тăракан техникăпа хĕçпăшалланнă, унта производствăна лайăхрах организациленĕ, çавăнпа вĕсем ĕç тухăçлăхне ытти предприятисенчен ытларах—66 процент ўстернĕ. Промысла кооперацийĕн предприятийĕсенче вара ĕçсем япăхрах пыраççĕ: ĕç тухăçлăхĕ 44 процент çеç ўснĕ.

Ĕç тухăçлăхне ўстерес тĕлĕшпе Шупашкарти электроаппаратура завочĕ, лента тĕртекен фабрика, Çĕмĕрлери йывăç япаласем тăвакан завод малта пыраççĕ. 1955 çулта, 1954 çулхипе танлаштарсан, Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ оборудованипе тухăçлăрах усă курнă.

Ĕç тухăçлăхне ўстермелли задание çултан-çул пурнăçласа пыман предприятисем те пур. Сăмахран, 1955 çулта мĕнпур предприятисенчен 32 проценчĕ ĕç тухăçлăхне ўстермелли плана тултарман. Пилĕкçуллăх хушшинче ĕç тухăçлăхне «Чăвашвăрман» тресчĕ 25 процент, Канашри вагонсем юсакан завод—12 процент, Куславккари çуртсем тăвакан завод—5 процент çеç ўстернĕ.

Предприятисем пурте пĕр тикĕс тухăçлă ĕçленĕ пулсан, республика продукци тата ытларах туса кăларнă пулĕччĕ.

ЭНЕРГЕТИКА ХĂВĂРТ АТАЛАНАТЬ

Предприятисем çулсеренех çĕнĕ машинăсемпе станоксем туянаççĕ. Инженерсемпе техниксен йышĕ тата рабочисен квалификацийĕ ўсет. Вĕсем технологи процесне çĕнетсе лайăхлатас, малта пыракан опытпа тата наука çитĕнĕвĕсемпе усă курас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕç. Уйрăмах фабрикăсемпе заводсен энергетика хуçалăхĕ çирĕпленнине палăртас пулать. 1955 çулта промышленность предприятийĕсен тата коммунальнăй хуçалăхăн электростанцийĕсем, 1950 çулхипе танлаштарсан, 2,3 хут нумайрах электроэнерги туса кăларнă. Шупашкарта пысăк теплоэлектростанци туса лартнă. Чылай предприятисен электростанцийĕсенче кивĕ турбинăсене, пăс хуранĕсене çĕннипе улăштарнă. Улатăрта пысăк электростанци тăваççĕ. Асăннă тĕслĕхсенчен çакă курăнать: энергетика промышленность предприятийĕсенчен хăвăртрах аталанать, рабочисем электроэнергипе ытларах усă кураççĕ. Çапла ĕнтĕ тухăçлăрах ĕçлеме, производствăна комплексла механизацилеме, çĕнĕ цехсем, мастерскойсем уçма, рабочисен ĕçне çăмăллатма паха майсем хатĕрленĕ.

Промышленноçпа коммунальнăй хуçалăхăн электростанцийĕсен хăвачĕ ўсни нумай МТС-семпе колхозсене электрификацилеме май парать. Кăçал Çĕрпў, Красноармейски, Чурачăк, Канаш, Шăхасан, Шупашкар, Ишлей районĕсенчи чылай колхозсене электричество кĕртеççĕ. Колхозсене электрификацилеме ялхуçалăх банкĕ 2,3 миллион тенкĕ кивçен укçа уйăрса парать.



ПРОДУКЦИН ХĂЙНЕ ЛАРАКАН ХАКĔ ЙЎНЕЛНИ

Пирĕн çĕршывра чĕртаварпа, материалсемпе, ĕç вăйĕпе, оборудованийĕпе тĕрĕс, типтерлĕ усă курма, çапла вара продукцин хăйне ларакан хакне тăтăшах йўнетсе пыма мĕн кирлине пурне те туса панă. Малта пыракан предприятисенче çав майсемпе яланах усă кураççĕ, шалти резервсене тупса палăртаççĕ, хуçасăрлăха хирĕç кĕрешеççĕ. 1955 çулхи 11 уйăхра Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ, продукцин хăйне ларакан хакне йўнетсе, 6,6 миллион тенкĕ перекетленĕ. Электроаппаратура завочĕн тата Сентĕрвăрринчи судоверфь коллективĕсем перекетлĕх режимне çирĕплетессишĕн, таса тупăш ытларах илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Малтан шутласа пăхнă тăрăх, 1955 çулхи 11 уйăхра промышленность, 1954 çулхипе танлаштарсан, продукцин хăйне ларакан хакне 7,5 процент йўнетнĕ. Ку—паха тĕслĕх. Анчах çав çитĕнĕве малта пыракан предприятисен шучĕпе тунă. Хуçалăх расчетне тĕреклетессишĕн, шалти резервсемпе, оборудованипе усă курассишĕн кирлĕ пек кĕрешмен предприятисем, трестсем, управленисем те чылайха. Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ планпа палăртнинчен 2,5 миллион тенкĕлĕх, Канашри вагонсем юсакан завод—2,1 миллион тенкĕлĕх чĕртавар, материалсем ытларах расходланă. Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленийĕ тупăшлă ĕçлеймест. 1955 çулхи 11 уйăхра вăл продукцин хăйне ларакан хакне йўнетес вырăнне 7,7 процент хаклăлатнă. Улатăрти тата Канашри кирпĕч завочĕсенче вара кирпĕчĕн хăйне ларакан хакĕ ытлашши пысăк пулнă. Çакă вăл чылай предприятисем производство планне тултарманнинчен, производствăна япăх организацилениччен, брак нумай тунинчен килнĕ.

ÇĔНĔ ПРЕДПРИЯТИСЕМ, ЦЕХСЕМ

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра республикăри халăх хуçалăхне тата культура строительствине аталантарма государство шучĕпе пĕр миллиард тенке яхăн укçа-тенкĕ хывнă, урăхла каласан, капитальнăй строительство, тăваттăмĕш пилĕкçуллăхрипе танлаштарсан, икĕ хут ўснĕ. Шупашкарта пир-авăр комбиначĕ, пысăк теплоэлектростанци, çăкăр завочĕ, Элĕкре—сўс-кантăр завочĕ, тĕрлĕ хуласемпе районсенче çăкăр пĕçерекен, кирпĕч тăвакан, хăма çуракан тата ытти предприятисем туса лартнă, кивĕ фабрикăсен, заводсен, электростанцисен хăватне пысăклатнă, çĕнĕ цехсем, мастерскойсем уçнă. Шупашкарта трактор деталĕсем тăвакан завод, çăкăр завочĕ, çу завочĕ, сăра завочĕ тата ытти предприятисене тума тытăннă. Строительство валли çулсеренех укçа-тенкĕ, оборудовани, материалсем нумай уйăрса пани Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн республика экономикине хăвăрт аталантарассишĕн тăрăшнине уççăн кăтартса парать.

ПИРĔН МАЛАШЛĂХСЕМ ПЫСĂК

Улттăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕ пуçланчĕ. 1956 çулта республикăри промышленность умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Çав задачăсене КПСС Центральнăй Комитечĕн июльти Пленумĕ йышăннă программăра палăртнă. Фабрикăсемпе заводсен продукци туса кăларассине ўстермелле, çĕнĕ йышши япаласем туса кăлармалла, техникăлла прогресс тумалла, производствăна организацилессине лайăхлатмалла. Рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин пурнăçĕ çултан-çул аванланать, культури ўсет. Вĕсем валли паха, йўнĕ, тĕрлĕ йышши таварсем çителĕклĕ туса кăларасси—социализмла промышленноçăн тивĕçĕ.

Халăх хуçалăхĕн планĕ тăрăх, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ пăхăнса тăракан государство промышленноçĕн тата кооперáци промышленноçĕн, 1955 çулхипе танлаштарсан, 41 миллион тенкĕлĕх продукци нумайрах туса кăлармалла. Вĕсен сĕтел-пукан, савăт-сапа, тумтир, ată-пушмак, строительство материалĕсем, урапа-çуна, апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине уйрăмах ытларах ўстермелле, продукци пахалăхне лайăхлатмалла. Вырăнти промышленность министерствине пăхăнса тăракан Çĕмĕрлери сĕтел-пукан фабрикинче кăçал пианино тата ача-пăча валли теттесем тума тытăнаççĕ.

Союзри министерствăсене пăхăнса тăракан предприятисене пĕлтĕрхинчен пысăкрах плансемпе заданисем çирĕплетсе панă. Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ сатин, миткаль тата ытти хаклăрах япаласем туса кăларать, катан пир тĕртсе кăларассине вара чакарать, мĕншĕн тесен совет çыннисем пахарах таварсем ытларах туянасшăн. Электроаппаратура завочĕ кăткăсрах аппаратсем тума тытăнать. Завод коллективĕ Инди тата Вьетнам валли электроаппаратсем тума пуçлать. Вăрмарти сĕтел-пукан фабрики чўрече рамисем, алăксем тума тытăнать. Кăçал Шупашкарти трактор деталĕсем тăвакан завод çĕршыва продукци пама пуçлать.

ÇĔНĔ СТРОЙКĂСЕМ

Кăçал Шупашкарта çул-йĕр строительстви валли машинăсем тăвакан завод лартма тытăнаççĕ. Республика столицинче союзри министерствăсене пăхăнса тăракан тепĕр пысăк предприяти пулать. Çакă ĕççыннисене хытă савăнтарать.

Пир-авăр комбинатне, электроаппаратура заводне, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатне тата ытти чылай предприятисене пысăклатаççĕ, çĕнĕ цехсем уçаççĕ, çĕнĕ оборудовани вырнаçтарса лартаççĕ. Вырăнти промышленность министерстви Шупашкарта çăматă тăвакан фабрика, тарасасем юсакан заводра—чугун шăратакан цех, Улатăрта—баян фабрики валли çурт, Канашра—цистерна тăвакан цех, хăшпĕр районсенче—кирпĕч завочĕсем лартма хатĕрленеççĕ.

Кăçал строительство материалĕсем туса кăларассине вăйлатма палăртнă, çавна май çĕнĕ предприятисем, цехсем уçма, производствăна механизацилеме укçа-тенкĕ чылай уйăрса панă. Вăрмарта строительство деталĕсем тăвакан завод тума Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленине бюджетран 3,5 миллион тенкĕ укçа уйăрса панă. Çак управлени тĕрлĕрен блоксем, черепица тăвакан цехсем уçать, киввисене пысăклатать. Шупашкарти кирпĕч заводне реконструкцилесе çитереççĕ. Унта чĕрĕ кирпĕче пăспа типĕтмелле тăваççĕ. Вăл хĕлĕн-çăвĕн кирпĕч тума тытăнать.

Чăвашпромсовет Комсомольски, Куславкка, Шупашкар, Чурачăк районĕсенче кирпĕч завочĕсем туса пĕтерет, Шăхасанта извĕçпе хăйăртан блоксем тăвакан завод лартать. Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан промышленность малалла аталанать. Шупашкарти çăкăр завочĕ, сăра завочĕ, Етĕрнере—консервсем хатĕрлекен цех тума, кивĕ çăкăр завочĕсене, армансене механизацилеме укçа-тенкĕ чылай уйăрса панă. Канаш хулипче çăкăр завочĕ тăваççĕ. «Чăвашвăрман» тресчĕ Кирери хăма çуракан заводра пурăнмалли çуртсем тăвакан цех уçать, ун валли 1,2 миллион тенкĕ укçа уйăрса панă. Çав цехăн çулталăкра тăватшар хваттерлĕ 286 çурт туса кăлармалла.

Улатăрта электростанци лартаççĕ. Ун валли кăçал 5 миллион тенкĕ уйăрнă. Коммунальнăй хуçалăх министерствине Шупашкарти канализацине çĕнетсе пысăклатма—1,5 миллион тенкĕ, пурăнмалли çуртсем лартма—2,68 миллион тенкĕ, водопровода пысăклатма—0,4 миллион тенкĕ укçа уйăрса панă.

Юлашки çулсенче республикăра торф промышленноçĕ самаях аталанчĕ. Пĕлтĕр, 1950 çулхипе танлаштарсан, 38 пин тонна торф нумайрах хатĕрленĕ. 1955 çулта Улатăр районĕнче «Большое лесное» шурлăхра механизмсемпе торф кăларма тытăннă. Шупашкарти, Улатăрти тата хăшпĕр районсенчи чылай предприятисемпе учрежденисем торфпа усă кураççĕ, торф çунтарса кирпĕч хĕртме те аван. Малашне топливо балансĕнче торф пысăкрах вырăн йышăнма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен йывăç çунтарни халăх хуçалăхне пысăк сиен кўрет, йывăçран паха япаласем туса кăларма пулать.

Торф—паха топливо, анчах ăна турттарма, тиесе пуштама кансĕр, çитменнипе тата çул çинче ванса чылай сая каять. Нумай республикăсемпе облаçсенче торфран кирпĕч евĕрлĕ брикетсем туса хатĕрлеççĕ. Брикетсене турттарма çăмăл, ванмаççĕ, вĕсем лайăх çунаççĕ. Шупашкар хулинчи ĕççыннисене, предприятисене, учрежденисене топливо тĕлĕшĕнчен ытларах пулăшас тесе, кăçал Атăл леш енчи торф предприятийĕ брикет завочĕ тума тытăнать. Çав заводăн çулталăкра 10 пин тонна брикет туса кăлармалла.

Совет çыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе тата ытти чылай ĕçсем тума палăртнă. Сăмахран, Канашри «Дружба» промартель çулталăкра 10 пин тимĕр кровать туса кăларакан фабрика лартать. Канашри апат-çимĕç комбиначĕ вырăнне кондитерски фабрика пулать.

Улатăрти тата Çĕмĕрлери çăкăр завочĕсенче сушка пĕçерекен цехсем организацилеççĕ, Шупашкарти çав цеха пысăклатаççĕ.

Ялхуçалăхне кирлĕ япаласем—урапа-çуна, цистернăсем, силос башнисем, хăма, ут таврашĕсем, шыв бакĕсем, известь т. ыт. те туса кăларасси вăйланать. Канашри моторсем юсакан завод производство программине 30 процент таран ўстерет.

Хуласемпе поселоксенче, предприятисенче пурăнмалли çуртсем, культурăпа йăла учрежденийĕсем чылай туса лартма палăртнă. Пассажирсем турттаракан автобуссен шучĕ ўсет. Чугун çул транспортĕнче, уйрăмах Канаш станцийĕнче строительство енĕпе пысăк ĕçсем пулаççĕ.

Совет правительстви предприяти директорĕсен прависене пысăклатасси тата çĕнĕ цехсем уçма, производствăна механизацилеме кивçен укçа парасси çинчен постановлени йышăннă. Çав постановлени хуçалăх руководителĕсен пуçарулăхне ўстерет, производствăна хăвăртрах ўстерме тата лайăхрах организацилеме пулăшать.

ГОСУДАРСТВО ПЛАНĔ—ЗАКОН

Эпир социализмла промышленноçăн çитĕнĕвĕсемпе пурте чун-чĕререн савăнатпăр. Анчах çитменлĕхсене курманни пысăк пăнăш пулнă пулĕччĕ. Промышленноçра усă курман резервсем нумай. Пирĕн республика экономикине хăвăртрах аталантармалли майсем—чĕртавар, топливо, уйрăмах ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Вĕсемпе пуррипе те туллин усă курмалла.

Коммунистсен партийĕ çапла вĕрентет: государство планĕ вăл министерствăсемпе предприятисемшĕн пуриншĕн те закон. Пирĕн плансем—директивăсем, вĕсене мĕнпур органсем, хуçалăх руководителĕсем пурнăçласа пыма тивĕçлĕ. Нумай фабрикăсемпе заводсем плана тăтăшах тултараççĕ тата ирттерсе тултараççĕ. Çав вăхăтрах юлса пыракан, планпа палăртнинчен сахалтарах продукци туса кăларакан, ĕç тухăçлăхне ўстермелли, продукцин хăйне ларакан хакне йўнетмелли заданисене çултан-çул пурнăçламан предприятисем те сахал мар-ха. Сăмахран, 1955 çулта вăтам шутпа кашни тăватă предприятирен пĕри продукци туса кăлармалли плана тултарман. Кăçал республикăра юлса пыракан фабрикăсем, заводсем, стройкăсем ан пулччăр. Предприятисем пурте пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлетчĕр. Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенче хăшпĕр предприятисем, вăрманпромхозсем, Куславккари çуртсем тăвакан завод, Вăрмарти сĕтел-пукан фабрики, хăшпĕр чугун çул станцийĕсем, стройкăсем япăх ĕçлени партипе совет общественноçне хумхантарать. Кăçал пирĕн промышленноçăн халиччен юлса пынă отраслĕсене—строительство материалĕсем туса кăларакан, йывăç хатĕрлекен промышленноçа, çавăн пекех строительствăна малти рете кăларассишĕн çине тăрса кĕрешес пулать.

Вырăнти промышленноçра, промысла кооперацийĕнче, апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан чылай предприятисенче нумай ĕçе алăпа тăваççĕ. Савăнпа унти производствăна механизацилесси, малта пыракан технологипе усă курмалла тăвасси çине министерствăсемпе организацисен тимлĕрех пăхмалла. Пысăк предприятисенче вырнаçтарса лартман е усă курман станоксемпе машинăсем сахал мар. Çав вăхăтрах вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн предприятийĕсем оборудовани çителĕклĕ туянаймаççĕ. Халăх хуçалăхĕн интересĕсем техникăпа туллин усă курма хушаççĕ.

Пирĕн малта пыракан предприятисен, цехсен, бригадăсен, новаторсен паха опычĕпе меслетне пĕтĕçтерес сарас тĕлĕшпе татăклă улшăнусем тăвас пулать. Рабочисем малта пыраканссен опычĕпе тата меслечĕпе ĕç вырăнĕнче, станоксем патĕнче паллашма пултарччăр.

Кăçал совет çыннисен пурнăçĕнче чаплă та паллă событи пулса иртет—Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съезчĕ пулать. Рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийĕ съезда ĕçри пысăк çитĕнўсемпе кĕтсе илме, съезд уçăлнă тĕле Тăван çĕршыва пысăк парне пама хатĕрленеççĕ. Съезд умĕнхи социализмла ăмăртăва анлăрах сарар, 1956 çулхи государство планне срокчен тултарар.

Малта пыракан опыта, наукăпа техника çитĕнĕвĕсене пропагандăласси тата вĕсемпе производствăра анлăн усă курасси, халăх хуçалăх планне пур кăтартусем тăрăх та куллен тултарса пыма ĕççыннисене мобилизацилесси агитаторсемпе пропагандистсем, коммунистсемпе комсомолецсем, инженерсемпе техниксем, мастерсем массăлла-агитацилле ĕçе тата техникăлла пропагандăна лайăх йĕркеленинчен, хăйсен пĕтĕм ĕçне производство ыйтăвĕсемпе тачă çыхăнтарса туса пынинчен, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн хастар кĕрешнинчен килет.

Пилĕкçуллăхра продукци туса кăларасси ўснĕ

Пир-авăр



Тумтир

Макарон

Ўкерчĕк çинче: Шупашкарти трактор пайĕсем тăвакан заводăн инструментальнăй цех корпусĕ. Ку цех кăçал продукци кăларма пуçлать.

Г. Зиньков фотоўкерчĕкĕ.

ССР Союзĕ Англири „Тетюхе майнинг корпорейшн" тата „Лена гольдфильдс" обществăсене панă обязательствăсем тăрăх тӳлесси çинчен тăракан ыйту пирки

ТАСС корреспонденчĕ пĕлнĕ тăрăх, Англири адвокатсен кантурĕ «Уолтерс энд Харт» ССР Союзĕн Лондонри посольствине çыру янă, 1932 çулпа 1934 çулта Англира «Тетюхе майнинг корпорейшн» тата «Лена гольдфильдс» обществисен ССР Союзĕнчи концессийĕсене пĕтернĕ май Совет Союзĕ çак обществăсене панă обязательствăсем тăрăх тӳлесе татасси çинчен тăракан ыйтăва хускатнă.

Совет Союзĕн обязательствисем тăрăх тӳлесе татассине хăвăртлăтас тĕлĕшпе Совет правительстви йышăннă мерăсем çинчен ССР Союзĕн Лондонри посольстви адвокатсен маларах асăннă кантурне пĕлтернĕ.

Çакна май ТАСС корреспонденчĕ ку ĕçе лайăх пĕлекен совет органĕсенчен ăнлантарса пама ыйтнă, вĕсем çапла пĕлтернĕ.

1932 çулпа 1934 çулт Англири «Тетюхе майнинг корпорейшн» тата «Лена гольдфильдс» обществăсен ССР Союзĕнчи концессийĕсене пĕтернĕ май Совет правительстви çав обществăсене обязательствăсем панă, обязательствăсем тăрăх тивĕçлĕ укçана тĕрлĕ сроксенче тӳлесе ымалла пулнă.

Çак обязательствăсем тăрăх тăтăшах, обязательствăсенче кăтартнă срокесенче, Лондонри Московски Халăх банкĕ урлă укçа тӳлесе пынă.

1940 çулхи çулла Великобритани правительстви СССР Государство банкĕн Литва, Латви тата Эстони банкĕсенчен туяннă, Англи банкĕнче выртакан ылтăнĕпе усă курма чарса лартнă, çакна законсăр йĕркепе тунă. Çавăн пирки Совет правительстви Англири «Тетюхе майнинг корпорейшн» тата «Лена гольдфильдс» обществăсене панă обязательствăсем тăрăх тӳлеме ирĕксĕрех чарăннă. Çак ыйту тăрăх ССР Союзĕпе Англи пĕр-пĕрин патне дипломатилле çырусем ярса илнĕ, çав вăхăтра Совет правительстви ку ыйтăва интересленекен икĕ енĕшĕн те юрăхлă йĕркепе татса пама хатĕр пулнине темиçе хутчен те кăтартса панă. Сăмахран, 1945 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчех ССР Союзĕн Лондонри посольстви Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине çапла пĕлтернĕ: Британи правительстви СССР Госбанкĕн ылтăнĕпе усă курма çавăн пек чарса тăрас йĕркене пăрахăçа кăларсанах Совет правительстви «Тетюхе майнинг корпорейшн» тата «Лена гольдфильдс» обществăсене панă обязательствăсем тăрăх тӳлемешкĕн çĕнĕрен тытăнма, парăма тӳлесе татма хатĕр тăрать, тенĕ.

Совет правительстви Англири «Тетюхе майнинг корпорейшн» тата «Лена гольдфильдс» обществăсене панă обязательствăсем тăрăх тӳлесе татасси çинчен тăракан ыйтăва йĕркелес тĕлĕшпе юлашки вăхăтра çĕнĕ утăмсем тунă. 1955 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче ССР Союзĕн Лондонри посольстви Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине асра тытмалли записка панă. Унта çапла пĕлтернĕ: Совет правительстви «Тетюхе майнинг корпорейшн» тата «Лена гольдфильдс» обществисене панă, халиччен тӳлемесĕр юлнă обязательствăсене СССР Госбанкĕн Англи банкĕнче выртакан, усă курма чарнă ылтăнĕн пĕр пайĕ шучĕпе тӳлесе татма килĕшет, тенĕ. Çапла ĕнтĕ, Совет правительстви маларах асăннă обязательствăсене çак пĕтĕм ылтăнпа çĕнĕрен усă курмалла тăвасси çинчен тăракан ыйтăва татса париччен тӳлесе татма килĕшнĕ.

ССР Союзĕн Лондонри посольстви асра тытма панă записка çине Англи правительствинчен ответ илмен-ха.

Францири Коммунистсен партийĕн политбюровĕн решенийĕ

ПАРИЖ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Францири Коммунистсен партийĕн политбюровĕ партие çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерме йышăннă. Решенире çакна палăртнă: Наци пухăвĕн январĕн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлавĕ Франци халăхĕн интересĕсемпе килĕшсе тăракан политикăшăн пыракан кĕрешӳре Коммунистсен партийĕпе унăн организацийĕсем пысăк вырăн йышăнса тăнине çĕнĕрен кăтартса пачĕ. Францири коммунистсен ĕçĕсене ĕççынни массисем хĕрӳллĕн ырлаççĕ, тенĕ решенире. Çакна ăна 1955 çулхи декабрь уйăхĕнче кăна партие çĕнĕрен 5.000 член кĕни те уççăн кăтартса парать.

Политбюро мĕнпур коммунистсемпе парти организацийĕсене парти январĕн 2-мĕшĕнчи суйлавра тунă чаплă çĕнтерĕве çирĕплетсе хăварассишĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшма, коммунистсен шухăш-ĕмĕчĕсемпе килĕшекен тата Франци политикине улăштарма тăрăшакан мĕнпур ĕççыннисене—арçынсене, хĕрарăмсене тата çамрăксене партие кĕмешкĕн пулăшма чĕнет.

Албани Халăх Республики 10 çул тултарнă ятпа

ТИРАНА, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Албани Халăх Республикине туса хунăранпа 10 çул çитнĕ май ĕнер Тиранăра савăнăçлă пуху ирттернĕ.

Халăх театрĕн залне промышленноçпа ялхуçалăхĕнче малта пыракансем, наука, литература тата искусство деятелĕсем, обществăлла организацисен представителĕсем пухăннă. Албанири Ĕçлĕх партийĕпе республика правительствин руководителĕсем президиума пырса кĕрсен, вĕсене пухури халăх ăшшăн саламланă.

Залра ССР Союзĕн Албанири вăхăтлăх поверенăйĕ М. Я. Хошев, Тиранăри посольствăсемпе миссисен пуçлăхĕсем тата сотрудникĕсем пулнă.

Албани Халăх Республики 10 çул тултарни çинчен Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Мануш Муфтиу доклад туса панă.

Пухăва пынисем, чун-чĕререн хавхаланса, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне, Совет правительствине тата СССР Верховнăй Совет Президиумне саламлă телеграмма яма йышăннă.

БОЛГАРИРЕ ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТСЕМ НУМАЙ ЛАРТНĂ

СОФИЯ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн виçĕ çулĕнче Болгарири ĕççыннисене государство укçа-тенкипе туса панă пурăнмалли çуртсен пĕтĕм лаптăкĕ пĕр миллион тăваткал метр ытла шутланать. Кунсăр пуçне, çак вăхăт хушшинче государство ĕççыннисене харпăр хăй валли уйрăммăн тата пĕрлешсе çуртсем лартма 130 миллион лева яхăн укçа уйăрса панă.

Пысăк хуласемпе промышленность центрĕсенче пурăнмалли çуртсем тăвас ĕç анлă сарăлнă. Сăмахран, София хулинче юлашки виçĕ çул хушшинче пурăнмалли нумай хутлă вуншар çуртсем туса лартнă, столицăри ĕççыннисем 5.466 çĕнĕ хваттер илнĕ. Болгарин промышленноçлă тата культурăллă тепĕр пысăк центрĕнче — Пловдив хулинче пурăнмалли çуртсем тума 1955 çулта кăна 32 миллион лев укçа расходланă. Хулара нумай хутлă 21 çурт лартнă. Вĕсенче 685 хваттер шутланать. Юлашки виçĕ çул хушшинче Димитрово хулинчи шахтерсене те хваттерсем нумай туса панă.

1956 çулта тăвакан пурăнмалли çуртсен пĕтĕм лаптăкĕ 527 пин тăваткал метра яхăн пулать.

БОЛГАРИПЕ ДЕМОКРАТИЛЛĔ ВЬЕТНАМ РЕСПУБЛИКИ ХУШШИНЧИ ТАВАР ÇАВРĂНАШĔПЕ ТӲЛЕВСЕМ ÇИНЧЕН ТУНĂ КИЛĔШӲ

ХАНОЙ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Нян дан» хаçат паян çапла пĕлтерет: январĕн 10-мĕшĕнче Ханойра Демократиллĕ Вьетнам Республикин правительствипе Болгари Халăх Республикин правительстви тавар çаврăнăшĕпе тӳлевсем çинчен тунă килĕшӳ çине алă пуснă.

Килĕшӳ тăрăх 1956 çулта Демократиллĕ Вьетнам Республики Болгарие ялхуçалăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем — какао, йывăç, кунжут тата ытти таварсем тăратать. Болгари Демократиллĕ Вьетнам Республикине электрооборудовани, химикалисем, эмелсем, халăха кирлĕ таварсем тăратать.

Сюници Мацумото Лондона пырса çитнĕ

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Япони хушшинчи дипломатилле çыхăнусем йĕркелесси çинчен калаçусем ирттерме ĕнер Япони делегацийĕн пуçлăхĕ Сюници Мацумото Лондона пырса çитнĕ.

ТОКИО, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Киодо Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕпе Япони хушшинчи калаçусене хутшăнакан Япони представителĕ Мацумото Лондона пырса çитнĕ хыççăн çапла каланă: «хальхи вăхăтра Япони общественноçĕ Японипе Совет Союзĕ хушшинчи калаçусене вĕсем пуçланă чухнехи, иртнĕ çулхи июнь уйăхĕнчи пек мар, нумай ытларах ырласа кĕтсе илет». Çакна пула «калаçусем часах ăнăçлă вĕçленессине» шанса тăма пулать, тенĕ вăл.

Мацумото çакна палăртнă: «вырăссемпе килĕшӳ хăвăртрах тăвасси Японири политикăлла лару-тăрупа тачă çыхăнса тăрать», тенĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Мацумото Японин калаçусенчи тĕп позицийĕ улшăнманнине кăтартса панă.

ТИТО ПРЕЗИДЕНТ ЮГОСЛАВИЕ ТАВРĂННĂ

БЕЛГРАД, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). ТАНЮГ агентстви çапла пĕлтерет: Эфиопипе Египетра пулнă хыççăн паян ирхине «Галеб» судно çинче Федеративлă Югослави Халăх Республикин президенчĕ Иосип Броз-Тито Пула портне таврăннă. Пула хулинче митинг пулса иртнĕ. Унта хулапа унăн çывăхĕнчи пунктсенчи 60 пин граждан пухăннă. Митингра Тито сăмах тухса каланă.

Китай халăх Республикинче. Кантон хулинче уçнă Совет Союзĕн экономикипе культурин çитĕнĕвĕсене кăтартакан выставка çумĕнче Совет çĕршывĕнчи малта пыракан опыта вĕрентмелли курс тунă. Çав курса пин çын ытла çӳренĕ.

Выставкăра ĕçлекен совет специалисчĕсем унта лекцисем вуланă, Китайри çынсем ыйтнипе чылай промышленноçпа ялхуçалăх предприятийĕсенче пулнă.

Ӳкерчĕк çинче: совет специалисчĕ А. Антонов Кантонри рабочисене Совет Союзĕнче туса кăларнă станок çинчен каласа парать.

Синьхуа фотоагентствин фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Китайри ялсенче гидроэлектростанцисем тăваççĕ

ПЕКИН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Китайăн нумай районĕсенчи ялсенче гидроэлектростанцисем тума тытăннă.

«Хэйлунцзянжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Хэйлунцзян провинцийĕнчи хăшпĕр ялсенче çавнашкал темиçе электростанцие туса пĕтерсе ĕçе янă ĕнтĕ. Китай хресченĕсен пӳрчĕсенче пирвайхи хут электричество лампочкисем çутатма пуçланă.

«Фуцзяньжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, 1956—1957 çулсенче Фуцзянь провинцийĕнчи ялсенче 170 гидроэлектростанци тума палăртнă. Кăçал унти ялсенче пысăках мар 50 электростанци тăваççĕ.

Ялсенче электростанцисем тумалли плансене Китай хресченĕсем савăнса кĕтсе илеççĕ, электростанцисем тăвас ĕçе активлă хутшăнаççĕ.

Китай Халăх Республикипе Судан пĕр-пĕрин патне дипломати представителĕсем яраççĕ

ПАРИЖ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй ĕçри çынсен сăмахĕсене шута илсе, Франс Пресс агентствин Хартумри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Судан премьер-министрĕ Исмаил Аль-Азхари Суданпа Китай Халăх Республики хушшинче дипломатилле çыхăнусем тытмалла тăвасси тата пĕр-пĕрин çĕршывне дипломати представителĕсем ярасси çинчен Чжоу Энь-лай премьер панă сĕнĕве йышăннă. Çапла ĕнтĕ, тесе палăртать корреспондент, Суданра Китай Халăх Республикин дипломатилле представительстви пулать. Африкăри ытти çĕршывсемпе араб çĕршывĕсенче унăн çавăн пек представительствăсем çук-ха.

Китайри социализмла улшăнусем

ПЕКИН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Женьминьжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Китайри чи пысăк хуласенчен пĕринче— Тяньцзиньре уйрăм çынсен мĕнпур магазинĕсене государствăпа уйрăм çынсем аллинче тăракан предприятисем, уйрăм çынсен тĕштырă продукчĕсемпе суту-илӳ тăвакан предприятийĕсене вара—государство магазинĕсем туса хунă.

Уйрăм çынсен суту-илӳ тăвакан предприятийĕсене государствăпа уйрăм çынсен аллинче тăракан предприятисем туса хунă май Тяньцзинь хулинче ĕççыннисен нумай митингĕсем, пухăвĕсем тата демонстрацийĕсем пулса иртнĕ.

Китай Халăх Республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ тунă заявлени

ПЕКИН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 9-мĕшĕнче Линьцзян районĕнче Америкăн икĕ çар самолечĕ Китай территорине вĕçсе кĕнĕ. Вĕсене хирĕç Китай Халăх Республикин сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем вĕçсе тухнă, вара Америка самолечĕсем каялла вĕçсе кайнă.

Америка самолечĕсем вĕçсе кĕнĕ пирки январĕн 10-мĕшĕнче Китай Халăх Республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ çакăн пек заявлени тунă:

1956 çулхи январĕн 9-мĕшĕнче Америкăн икĕ çар самолечĕ Китай территорине пырса кĕни вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар тĕлĕшĕнчи пысăк провокацийĕ, Китай Халăх Республикин территорийĕне суверенитечĕ çине тапăнни пулать. Çакна хирĕç Китай правительстви татăклăн протестлет, çавнашкал ĕçсем малашне татах пуласран сыхланма Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствин мерăсем йышăнмалла, тесе требовани лартать.

Китай правительстви çакна палăртма кирлĕ тесе шутлать: США правительстви, пĕр енчен илсен, Америкăпа Китай хушшинче Женевăра пыракан калаçусене вăраха тăсмалли тактикăпа усă курать, тепĕр енчен илсен, вăрçа хатĕрленессине хăвăртлатас шутпа хăйĕн аслă чиновникĕсемпе офицерĕсенчен чылайăшне пирĕн çĕршыв районне—Тайвань утравĕ çине ярать. Америкăн çар самолечĕсем Китая вĕçсе кĕни ăнсăртран пулнă ĕç мар. Çакă вăл Инçет Хĕвелтухăçĕнчи лару-тăрăва йывăрлатмашкăн Пĕрлешӳллĕ Штатсен кирек мĕнле майсемпе те усă курма хатĕр тăнине кăтартса парать.

США правительстви çапла хăтланни Китай халăхне хытă тарăхтарать. Тĕнчери мире юратакан çĕршывсемпе халăхсем Пĕрлешӳллĕ Штатсен провокацилле ĕçĕсем тĕлĕшпе хăйсен сыхăлăхне вăйлатмасăр тăма пултараймаççĕ.

ИНДИ США-ран ТУЛĂ ИЛМЕ КИЛĔШМЕН

ПАРИЖ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Орисса штатĕнче шыв илнипе хĕн-хур тӳснĕ халăх валли Пĕрлешӳллĕ Штатсем Индие çĕр пин тонна тулă тăратма сĕннĕ. Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, Инди правительстви çак сĕнĕве йышăнман, мĕншĕн тесен Америка организацийĕсем çав тулла Индире мĕнле валеçнине тĕрĕслесе тăрасшăн пулнă. Инди правительстви: кун пек услови Инди Республикин авторитетне сиен кӳрет, тесе шутлать.

ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИЕ АТОМЛА БОМБАСЕМПЕ ХĔÇПĂШАЛЛАНТАРМА ШУТЛАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри обозревателĕ Роберт Аллен çапла пĕлтерет: «урăх государствăсене пулăшмалли бюджета нумай миллиард доллар ӳстерни вăл, пуринчен малтан, США правительствин Çурçĕр Атлантика блокĕнчи союзникĕсене хĕçпăшаллантармалли, «халăха пĕлтермен» планĕсенчен» килет.

Обозреватель каланă тăрăх, çак плансем Çурçĕр Атлантика блокĕн членĕнче тăракан çĕршывсене, çав шутра Хĕвеланăç Германие, атомлă хĕçпăшалпа хĕçпăшаллантарма палăртаççĕ.

Аллен çакна палăртать: иртнĕ уйăхрах ĕнтĕ Парижра, Çурçĕр Атлантика блокĕнчи çĕршывсен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен сессийĕнче, Даллес хĕвеланăçĕнчи союзниксене «малтанлăха тунă ĕç тесе шутласа», çавăн пек хĕçпăшал тăратма сăмах панă.

Аллен каланă тăрăх, хальхи вăхăтра Эйзенхауэр президент атом энергийĕ çинчен калакан закона тӳрлету кĕртесси çинчен конгреса сĕнӳ тăратас ыйтăва пăхса тухать. Çак тӳрлету США правительствине çав плансене пурнăçлама май панă пулĕччĕ. Анчах та ун пек сĕнӳ пирки, Аллен шучĕпе, конгресра вăйлă тавлашу пуçланма пултарать.

АМЕРИКА КОНКУРЕНЦИЙĔ ЯПОНИЕ ПЫСĂК СИЕН КӲРЕТ

ПЕКИН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Токиори хаçатсенче Японин çĕрĕçпе вăрман ĕрчетес ĕç министерствин доклачĕ пичетленсе тухнă. Докладра каланă тăрăх, Японире «Америкăн ялхуçалăх продукчĕсене вĕсен чăн-чăн хакĕнчен йӳнетсе сутни» Японин ялхуçалăхне пысăк сиен кӳрет.

Январĕн 9-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă çак докладра çапла çырнă: Америкăран Японие тулă илсе пырса сутни Японири ялхуçалăх производствине ӳстерме чăрмантарать. Пĕрлешӳллĕ Штатсем Японин ялхуçалăхне «çĕнĕлле йĕркелеме», урăхла каласан, Японие хăйсен тулă сутмалли рынокĕ туса хума тăрăшаççĕ.

Японири «Дзеней» журнал Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсен ялхуçалăх продукчĕсене вĕсен чăн-чăн хакĕнчен йӳнерехе сутнине сивлет.

Республикăри хуласемпе ялсенче

XXI-мĕш шахмат чемпионачĕ

Республикăри XXI-мĕш шахмат чемпионачĕ вĕçленсе пырать. Çавах та хăш шахматист республика чемпионĕн ятне илесси çинчен татса калама çук-ха. Турнир пуçланнă хыççăн темиçе кун хушши çамрăк шахматист Родионов малта пычĕ. Анчах та вăл çиччĕмĕш турта Шупашкар хули чемпионĕпе Никитинпа выляна чухне тĕрĕсех çӳреймерĕ, икĕ пешка выляса ячĕ. Çак партие тепĕр хут выляна чухне Никитин ăна çĕнтерчĕ.

Çиччĕмĕш турта Сиротинпа Чугунов вылянă парти нихăшĕ те çĕнтерейменнипе вĕçленчĕ. Петров—Тяминран, Игумнов—Соболевран, Романов—Казаковран, Муртазин—Гуляевран выляса илчĕ.

Малтанхи турсенчен юлнă партисене вылянă чухне Москалев—Яковлева, Соболев—Тямина çĕнтерчĕ. Тепĕр чухне выляса пĕтерме хăварнă Чугунов—Никитин партийĕнче Никитин выляса илмелле пекчĕ. Анчах та вăл лайăхах выляймарĕ. Ку парти нихăшĕ те çĕнтерейменнипе вĕçленчĕ, Игумновпа Родионов, тепĕр хут вылямасăрах, хăйсен партийĕнче нихăшĕ те çĕнтерейменни çинчен пĕлтерчĕç.

Саккăрмĕш турта республика чемпионĕ Чугунов Казаковран выляса илчĕ, Родионов — Москалева, Никитин — Соболева, Петров—Муртазина, Тямин—Романова çĕнтерчĕ. Сиротинпа Яковлев тата Игумновпа Гуляев партийĕсене тепĕр чухне выляса пĕтерме хăварнă.

Тăххăрмĕш турта Петровпа Игумнов пуринчен те малтан выляса пĕтерчĕç. Игумнов Петрова çĕнтерчĕ. Республика чемпионĕ Чугунов Яковлевран выляса илчĕ. Çак турти Гуляевпа Никитин партине тепĕр чухне выляса пĕтермелле тунă. Ку партире Гуляевăн пĕр ытлашши пешка пур. Сиротин Родионова выляса ячĕ, Романов Муртазина çĕнтерчĕ. Казаков халиччен хăйĕнпе тĕл пулнă пур шахматистсене те выляса янăччĕ. Тăххăрмĕш турта вăл Тяминран выляса илчĕ. Соболевпа Москалев партийĕ нихăшĕ те çĕнтерейменнипе вĕçленчĕ.

Тăхăр тур хыççăн, 7,5-шер очко пухса, Чугуновпа Родионов малта пыраççĕ. Никитин 8 партире 6,5 очко, Петров тăхăр партире 6 очко, Сиротин, Игумнов тата Яковлев—4,5-шер очко (8 партире) выляса илнĕ.

В. СЕРГИЕВСКИЙ.

Паллă ученăя А. С. Попова чысласа

Паян вырăссен паллă ученăйĕ, радио шутласа кăларнă А. С. Попов вилнĕренпе 50 çул тултарать. Çакна май республикăри Максим Горький ячĕпе тăракан библиотекăра ятарласа кĕнеке витрини, ДОСААФ-ăн республикăри радиоклубĕнче—фотовитрина организациленĕ.

Радиоклубри фотовитрина республикăри радиокружоксен ĕçĕсемпе паллаштарать. Пирĕн республикăри ДОСААФ членĕсемпе халăх хушшинче радио ĕçне юратакансен йышĕ çултан-çулах ӳссе пырать. ДОСААФ членĕсем, пушă вăхăтра радио кружокĕсене çӳресе, радио енĕпе хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстереççĕ. 1953 çулччен пирĕн республикăра радио енĕпе разряд нормине тултарнисем пулманпа пĕрех. Кружоксенче 1954 çулта 56 разрядник, 1955 çулта 129 разрядник вĕрентсе хатĕрленĕ. Радио ĕçĕпе пуринчен ытла шкул ачисем интересленеççĕ. Сăмахран, Муркаш районĕнчи Тойкилтĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулта темиçе çул хушши ĕнтĕ радиокружок ĕçлет. Çак вăхăт хушшинче ачасем, 200 ытла детекторлă тата лампăллă радиоприемниксем туса, вĕсене колхозниксен килĕсене лартса панă.

М. КОШКИН.

МТС-сем валли—çĕнĕ техника

Пирĕн республикăри машина-трактор станцийĕсем çулленех çĕнĕ йышши хăватлă ялхуçалăх машинисемпе пуянланаççĕ. МТС-сен машина паркĕн вăй-хăвачĕ ӳсни уй-хир ĕçĕсене тата выльăх-чĕрлĕх фермисенчи йывăр ĕçсене ытларах механизацилеме май парать.

1956 çулта МТС-сем валли нумай çĕнĕ машинăсем килмелле. Çак кунсенче ДТ-54 йышши 20 трактор, «Беларусь» маркăллă 20 трактор, ЗИС-355 маркăллă 10 автомашина кӳрсе килнĕ.

Милици работникĕсен пултарулăх коллективĕ

Ик-виçĕ çул каярах Шупашкарта милици работникĕсен хор кружокне организациленĕ. 1955 çулта ташă кружокĕпе струннăй оркестр ĕçлеме пуçларĕç. Художествăлла пултарулăх коллективĕсене музыкăпа искусство ĕçне юратакан Творцовăпа Маратканов юлташсем ертсе пыраççĕ. Коллектив валли юлашки вăхăтра 50 пин тенкĕлĕхе яхăн тĕрлĕ музыка инструменчĕсем илсе панă.

Художествăлла пултарулăх коллективĕсен ĕçĕ лайăхлансах пырать. 1955 çулта Ишлей районĕнчи шефа илнĕ «Сталинская гвардия» колхозра, Шупашкарти икĕ вăтам шкулпа ФЗО шкулĕнче, «Легпромстрой» трест клубĕнче, электроаппаратура заводĕнче тата Росглаввино совхозĕнче концертсем ирттернĕ. Концертсем умĕн милици органĕнчи ертсе пыракан работниксем лекцисемпе докладсем туса панă.

Нумаях та пулмасть «Динамо» клубра тата текстильщиксен вечерĕнче çак художествăлла пултарулăх коллективĕн концерчĕсем пулчĕç. Концертсене 300—500 çын пухăнчĕ.

И. МАЛОВ.

Куславккара

Рабочисене вĕрентме. Çуртсем тăвакан заводра рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен квалификацине ӳстерме пулăшас тата вĕсене техникăна вĕрентес енĕпе çулленех укçа-тенкĕ нумай расходлаççĕ. 1955 çулта 13.200 тенкĕ расходланă пулсан, кăçал çак енĕпе 19 пин тенкĕ расходлама палăртнă.

Халĕ заводри цехсенче шоферсем, электромонтерсем, электровоз водителĕсем вĕрентсе хатĕрлекен кружоксем ĕçлеççĕ. Техминимум кружокĕсен занятийĕсене кăна 200 çын ытла çӳрет. Çитес кунсенче рамщиксен кружокĕнче занятисем пуçланаççĕ.

Поселок ӳсет. Çуртсем тăвакан заводра ĕçлекенсен поселокĕ çултан-çулах ӳссе пырать. Юлашки вăхăтра кăна кунта пысăк çуртсем вунă ытла тата заводри работниксем хăйсем валли 50 çурт туса лартнă.

Халĕ поселокра çĕнĕ клуб, нумай хватерлĕ икĕ çурт тăваççĕ. 400 ача вĕренмелĕх шкул çурчĕ туса пĕтермелле.

Вулакансен конференцийĕ. Нумаях пулмасть Культура çуртĕнче «Совет литератури—ĕççыннисене коммунизмла воспитани памалли хăватлă вăй» темăпа вулакансен конференцине ирттерчĕç. Ку ыйтупа 1-мĕш вăтам шкулти X-мĕш класра вĕренекен А. Мораньков, нотариус М. Богаткина, 2-мĕш вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Ф. Сафонова юлташсем доклад турĕç. Унтан кĕнеке вулакансем тухса каларĕç.

Вулакансен конференцийĕнче 200 çынна яхăн пулчĕ.

М. АЛЕКСАНДРОВ.

ПЫСĂК ВЫЛЯВСЕМ

Шупашкарти перекет кассисене ĕççыннисем заем облигацийĕсене тĕрĕслеттерме выляв укçи илме нумай пыраççĕ.

Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи мастер Н. Иорш государствăн СССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1952 çулхи заемĕн облигацийĕпе 10 пин тенкĕ, çак заводри токарь И. Захаров—25 пин тенкĕ выляса илни палăрчĕ.

Хулари ытти ĕççыннисене те выляв укçи нумай тӳленĕ. Нумайăшĕ хăйсем выляса илнĕ укçана перекет кассине хывреç.

П. ЕФИМЕНКО.

Хĕллехи гастрольте

Çĕнĕ çул пуçлансанах республикăри театрсем районсене гастроле тухса кайрĕç. Чăвашсен государство академи театрĕ, Шăхасанта, Канашра тата Вăрмарта пулса, «Кай, кай Ивана» спектакле ăнăçлă выляса панă. Халĕ театр çак спектакле Вăрмар районĕнчи колхозсенче кăтартса çӳрет. Чăваш театрĕн артисчĕсем гастрольте январĕн 20-мĕшĕччен пулаççĕ.

Республикăри вырăс драма театрĕн коллективĕ Çĕмĕрлепе Канаш хулисенче тата Вăрнар поселокĕнче пулнă. Театр выляса кăтартнă «Люська» спектакле пурĕ 2 пин çын пырса курнă.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

КИНО

«РОДИНА». Январĕн 13-мĕшĕнче 10, 12, 14 сехетсенче пуçланакан сеанссенче илемлĕ фильм «Васек Трубачев и его товарищи», 16, 18.15, 20, 22 сехетсенче пуçланакан сеанссенче çĕнĕ илемлĕ кинокомеди «Максим Перепелица» кăтартаççĕ.

ШУПАШКАРТИ
строительсем хатĕрлекен 4-мĕш номерлĕ шкул
1956 вĕренӳ çулне вĕренме илесси çинчен
ПĔЛТЕРЕТ

Строительсем хатĕрлекен шкула 16—17 çула çитнĕ арçын ачасемпе 16—18 çула çитнĕ хĕрачасене илеççĕ. Шкул платник-опалубщиксем, каменщиксем, кăмака тăвакансем, штукатур-фасадчиксем, слесарь-сантехниксем, бетонщик-монтажниксем пулма вĕрентсе хатĕрлет. Шкулта 10 уйăх вĕренмелле.

Вĕренекенсене укçасăр апат çитереççĕ, çи-пуç параççĕ тата общежитие вырнаçтараççĕ. Занятисем 1956 çулхи февралĕн 6-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Заявленисене директор ячĕпе 1956 çулхи январĕн 25-мĕшĕччен памалла. Вĕсемпе пĕрле çакăн пек документсем пулмалла: а) автобиографи; б) çуралнине çирĕплетекен свидетельство; в) вĕренни çинчен ĕнентерекен свидетельство; г) ĕçре пурăнни çинчен справка тата икĕ фотокарточка.

Заявлени панă çамрăксен хăйсемпе пĕрле паспортсем илсе килмелле, январĕн 20—25-мĕшĕсенче сывлăха тĕрĕслеттермелле.

Шкул адресĕ: Шупашкар хули, строительсем хатĕрлекен 4-мĕш №-лĕ шкул (аэродром пулнă вырăнта).

ДИРЕКЦИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—3-04, литературăпа искусство пайĕ—8-81, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00016 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 16. Тираж 37.000 экз.